24-мĕш çул тухать. Хакĕ 15 пус.

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

1941
СЕНТЯБРЬ
25
КĔҪНЕРНИКУН
226 (5941) №

Чăваш Коммуни

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ХАҪАЧĔ.

Чăваш халăхĕн паттăр ывăлĕсем

Халăхсен аслă çулпуҫĕ Сталин хăйĕн историллĕ сăмахĕнче кăçалхи июлĕн 3-мĕшĕнче çапла каларĕ: «Тăшман хаяр та сĕмĕр. Вăл эпир тар юхтарса ĕçленĕ çĕрсене туртса илес, хамăр вăйпа ĕçлесе тунă тырпула тата нефте туртса илес тĕллеве лартать. Вăл помещиксен власне каялла тавăрас, царизма каялла тавăрас, вырăссен, украинецсен, белоруссен, литовецсен, латышсен, эстонецсен, узбексен, тутарсен, молдаванецсен, грузинсен, армянсен, азербайджанецсен тата Совет Союзĕнчи ытти ирĕклĕ халăхсен наципллĕ культурине наципллĕ государственноçне пĕтерсе хурас тĕллеве лартать, вĕсене, нимĕçлетес, вĕсене нимĕç князĕсемпе баронĕсен чурисем туса хурас тĕллеве лартать».

Анчах, ирĕр фашистсем ССР Союзĕнчи халăхсене нихăçан та хăйсен чурисем туса хурас çук. Совет государстви нумай нацисен государстви пулса тăрать. Халăхсен тăванлă туслăжĕ çирĕп пулни, çав халăхсем пĕр-пĕрне шанса пулăпса тăни совет государствин тĕрекĕ пулса тăрать.

Пирĕн аслă çулпуҫҫем Ленинпа Сталин халăхсен туслăхне çирĕплетнĕç. Совет Союзĕнчи халăхсен туслă сыхăнăвĕ никам çĕнтерейми вăй пулса тăчĕ. Сталинла пятилеткăсен çулĕсенче союзлă тата автономлă республикăсемпе облаҫҫем, аслă вырăс халăхĕ пулăшнипе, хăйсен вăйлă промышленноçне, колхозлă пуян та культурăллă пурнăçне туса хучĕç, вĕсен культури ӳссе пычĕ. Германи фашизмĕ пирĕн çĕршыври халăхсен ирĕклĕхне пĕтерсе хурасшăн, вĕсене тăван чĕлхепе калаçма чарса, вĕсен тăван шкулĕсемпе культурăллă учрежденисене хупса лартасшăн.

Совет Союзĕнчи халăхсем, пурте пĕр сын пек пулса, хăйсен ирĕклĕхĕпе малашлăхне тискер фашизмран хӳтлесе хăваpма отечественнăй вăрҫа ҫĕкленсе тухрĕç. Халăх хăйĕн юнпа тата тарпа çĕнсе илнĕ ырлăхне нихăçан та ирçĕр фашистсене парас çук. Çĕнтерӳ е вилĕм. Çакăн пек калать отечественнăй вăрçă фронтĕнчи хамни боец. Совет Союзĕнчи халăхсен ывăлĕсем: вырăсĕ те, украинецĕ те, белорусĕ те, тутарĕ те, чăвашĕ те пурте пĕр ретĕ тăрса, алла-аллăн тытăнса, этемлĕхĕн чи тискер тăшманне хирĕç хăйсен пурнăçне шеллемесĕр çапăҫҫĕ, вĕсен пĕр ӳмĕт — Аслă Октябрьте çĕнсе илнисене тăшманран хӳтлесе хăварасси.

Отечественнăй вăрçă фрончĕсенче хăйсен хăюллăхĕпе паттăрлăхне кăтартнăшăн награднланисем хушшинче Совет Союзĕнчи хамни халăх ывăлĕсен ячĕсене тупса вулама пулать. Вĕсен йышăнче вырăс халăхĕн ывăлĕ капитан Иван Дроздов, украинец капитан Алексей Антоненко, еврей лейтенант Наум Сорокин, чăваш старший сержант Петр Павлов, тутар лейтенант Хасан Ибатулин т. ыт. те.

Геройсен списокĕ ӳссех пырать. Отечественнăй вăрçăн фрончĕсенче пыракан çапăçăвăн хамни кунĕ, хамни сехечĕ çĕнĕ геройсем çуратать. Çав паттăрсен семьинче пирĕн чăваш халăхĕн мухтавлă ывăлĕсем те пур.

Капитан-орденоносец И. Петров юлташăн танковăй подразделенийĕ Н. пункчĕн çурçĕр енче противникăн танкĕсене тата мотопехотине атакăланă. Çав çапăçура Петров капитанăн танковăй подразделенийĕ противникăнне пĕтĕмпе 40 танк çĕмĕрсе тăкнă. Совет танкĕсен гусеницисемпе таптаса нимĕҫсен противотанковăй темиçе орудине пĕтерсе тăкнă.

Филиппов ертсе пыракан взводри связистсем хĕрӳллĕ çапăçу пынă йывăр самантсенче противник вăйлăн перçе тăнине пăхмасăр, шывлă шурлăхсем урлă çыхăну линийĕ хывнă, командовани панă заданине вăхăтра тата чыслăн пурнăçланă. Çав çапăçура Филиппов командир тата унăн взводĕнчи боецсем хăйсен хăюллăхĕпе тӳсĕмлĕхне кăтартса панă.

Фашизма хирĕç пыракан хаяр çапăçусенче коммунистсемпе комсомолецсем хăйсен пурнăçне шеллемесĕр кĕрешеҫҫĕ, чи хăрушă, чи йывăр самантсенче вĕсем ытти боецсене хавхалантараҫҫĕ. Красноармеец-орденоносец И. Павлов çапăçăва кĕрес умĕн хăйне комсомола илме ыйтса заявлени панă. Ăна комсомол ретне илнĕ. Павлов юлташ çапăçура Ленинла—Сталинла комсомолăн ятне чыслăн тытса пыма пуллă. Тепĕр 30 минутăран вĕсен часĕ фашистсене хирĕç атакăна кĕрсе кайнă. Çамрăк комсомолец Павлов çав хаяр çапăçура хăй пĕччен 11 фашиста чиксе пăрахнă, вăл хăйĕн сăмахне çапăçура тӳрре кăларнă. Çавăн пекех, ВКП(б) членĕн кандидачĕ В. Тихонов юлташ фашистсен мотоколоннине пĕтерсе тăкас çĕрте темиçе хутчен çапăçура пулса хăйĕн хăюллăхне кăтартнă.

Сергей Ушаков хăйĕн отделенине тăшман йышăнса илнĕ пĕр яла илсе кĕнĕ те фашистсен штабне çĕмĕрсе тăкнă, 4 офицера штыкпа чиксе пăрахнă тата фашистсем йывăç çумне сыхса лартнă ватă старике вилĕмрен çăлса хăварнă. Кĕçĕн сержант К. Осипов юлташ командованин заданине пурнăçа кĕртнĕ чухне фашистсен тылне лекнĕ пулнă. Чăсри юлташĕсем ăна çухатнă. Анчах вăл шăп пĕр талăк иртнĕ хыççăн фашистсен кăшălĕнчен çăлăнса тухнă, хăйĕнне пĕрле пулнă пиллĕк боецран пĕрне те çухатман. Осипов фашистсен тăватă салтакне тата пĕр пулеметне илсе пынă.

Отечественнăй вăрçăн фрончĕсенче чăваш халăхĕн ывăлĕсемпе пĕрлех, чăваш хĕрачисем те — çĕршывăн çулăмлă патриотисемпе—хăйсен паттăрлăхне кăтартаҫҫĕ, вĕсем аманнă боецсемпе командирсене сыватас тĕлĕшпе хăйсен вăйне, пурнăçне шеллемесĕр ĕçлеҫҫĕ. Чăваш республикинчен кайнă медсестрасем Н. Елисеева комсомолка, З. Ятманова, Е. Дмитриева юлташсем фронтăн малти линийĕсенче пулса, аманнă вунпар боеца илсе тухса пулăшу панă, вĕсене вилĕмрен çăлса хăварнă.

Паян эпир Действующи арминчен килнĕ çырусене пичетлесе кăларатпăр. Çав çырусем чылайăшĕ чăваш красноармеецсемпе командирсен çапăçури мухтавлă ĕçĕсем çинчен каласа параҫҫĕ. Чăваш красноармеецсемпе командирсем ирçĕр фашизма хирĕç хăйсен пурнăçне шеллемесĕр çапăçнине кăтартса паракан фактсем вунпар, çĕршер илсе кăтартма пулать. Çав хăюллисенчен хăшĕрисем совет правительствин наградине — орденсемпе медальсем илме тивĕçлĕ пулнă.

Халăхсен туслăхĕпе пĕрлĕхĕ фронтра çеç мар, тылра та çирĕплесех пырать. Пирĕн çĕршыври халăхсен ĕçре пĕр ӳмĕт: фронта валли мĕн кирлĕ, çавсене йăлтах туса памалла, пĕтĕмпех тăшмана çĕнтерме!

Совет халăхĕ хăйĕн паттăр ывăлĕсен мухтавлă ĕçĕсемпе савăнать. Фронтри кашни боец тăвакан çĕнтерӳ тылри кашни сынна хавхалантарать, ĕçре çĕнĕ çитĕнӳсем тума чĕнет.

Фашизмăн вăйĕ кашни кунах хавшалса пырать. Çав вăхăтрах ăна хирĕç çĕкленекен вăйăн хăвачĕ ӳссе пырать. Совет халăхĕ фашистла бандитсене хирĕç паттăрăн çапăçни тĕнчери антифашистла вăйсене пухса çирĕплетет. Фашизма вилĕм шăпи кĕтет. Çĕнтерӳ пирĕн алăра пулать.

Кĕçĕн политрукăн Панкратовăн геройла ĕçĕ

ДЕЙСТВУЮЩИ АРМИ, сентябрĕн 23-мĕш. (ТАСС спецкорĕ). Фронтăн Çурçĕр-Хĕвеланăç енчи участокĕсенчен пĕринче пирĕн часĕсем нимĕҫсен вăйлă укрепленийĕ тата тактика енчен питĕ кирлĕ пунктне атакăланă.

Противник атака тăвакан боецсене пулеметсенчен хăватлăн персе кĕтсе илнĕ. Снайперсем темиçе хутчен персе тăшманăн виçĕ пулеметне пăчлантарса лартнă. Атака вăхăтĕнче кĕçĕн политрукăн Панкратовăн аллине пуля лексе витĕр тухнă. Вăл леме пултарайман.

Лайăх позици йышăнса тăракан нимĕç пулеметчикĕ атакăлакан пирĕн боецсем çине вăйлăн персе тăнине курнă та, Панкратов, хăй хытă аманнине тата юнне нумай çухатнине пăхмасăрах, тăшман пулеметчĕ çине сиксе ӳксе, ăна хăйĕн кĕлеткипе хупланă.

Геройăн ӳтне вунпар пуля кĕрсе ларнă. Анчах тăшман пулеметне чарса лартнă. Çак кĕске самантра пирĕн батальон тăшман позицине çĕмĕрсе кĕрсе кайнă та, ăна лапчăтса тăкнă. Красноармеецсем хăйсен политрукĕн мухтавлă ĕçĕпе хавхаланса, фашистсене хаярăн пере-пере вĕлернĕ, юлташийĕсене укрепленийлĕ пунктран сирпĕтсе кăларса тата темиçе километр хăваласа янă.

И. ДЕНЕНБЕРГ.

Нимĕç самолечĕсем Мускав çине вĕҫсе пыни

Сентябрĕн 24-мĕш ыран тенĕ чух çĕрле нимĕç самолечĕсен группи Мускав çине вĕҫсе килме хăтланнă. Зенитнăй артиллеристсем тăшман самолечĕсене сапаласа янă. Хула районне икĕ самолет кĕрсе кайнă, вĕсем пĕчĕк калибрлă фугаслă темиçе бомба тата вут чĕртекен нумай мар бомбăсем пăрахнă. Бомбăсем ӳкнипе пулнă спен пысăк мар.

Совет Информаци Бюровĕнчен

Сентябрĕн 23-мĕшĕнчи каҫхи пĕлтерӳ

Сентябрĕн 23-мĕшĕнче пирĕн войскăсем пĕтĕм фронтра противника хирĕç çапăҫусем туса пынă.

Сентябрĕн 21-мĕшĕнче противникăнне 53 самолет пĕтерсе тăкнă, вĕсенчен 28 самолетне сывлăшри çапăçусенче перçе антарнă тата 25 самолетне аэродромсенче пĕтерсе тăкнă. Пирĕн 16 самолет пĕтнĕ.

* * *

Тытăкăна илнĕ нимĕç офицерĕсемпе салтакĕсем совет артиллерийĕ фашистла çарсене пысăк сухату кӳни çинчен каласа параҫҫĕ. Тытăкăна илнĕ полковник Феликс Качинский, нимĕç дивизийĕн артиллери начальникĕ, хăйне допрос тунă чухне çапла каланă: «Сирĕн артиллеристсем артистсем пекех ĕçлеҫҫĕ. Вĕсем огневой позицисене хăварт тата вăрттăн уйăхтараҫҫĕ, вĕсен батарейисене ниепле те тытма çук».

«Юнкерс-88» бомбардировщикăн пилочĕ фельдфебель Антон Эрб хăйĕн показанийĕсенче çапла палăртать: «Вырăссен артиллерийĕ, тăллесех каласан, зенитнăй артиллерийĕ, уйрăмах вăйлă, унăн вăйне эпĕ хамăн çурăм çинче тӳссе куртăм». Ефрейтор Роберт Пранг çапла каласа парать: «Вырăссен артиллерийĕ пире канăç памарĕ. Пирĕн çине икĕ эрнене яхăнах перçе тăчĕç, перçе тăрасси сайра-хутра çеç шăпланатчĕ. Пире пур çĕрте те, хăнтăрла та çĕрле те снарядсем пырса тиветчĕç. Эпир калама çук пысăк сухатусем тӳсрĕмĕр. Чĕррĕн юлнисен нервисем татăклăнах пăсăлса кайрĕç».

* * *

Фронтăн хĕвеланăç енче тăватă кун хушши хаярăн çапăçнă хыççăн Масленников командирăн часĕсем нимĕҫсен 102-мĕш пехотнăй дивизинн 233-мĕш тата 235-мĕш пехотнăй полкĕсене поражени кӳнĕ, вĕсен юлашкийĕсене Западная Двина юханшывĕн тепĕр енне хăваласа янă. Çапăçу хирне тăшманăн салтаҫсемпе офицерсем 2.500 çын ытла вилсе юлнă. Пирĕн артиллерирен перçе артиллерин икĕ батарейине тата миномĕтсен вунă батарейине çĕмĕрсе тăкнă. Трофейăсем тытса илнĕ.

* * *

Фронтăн Çурçĕр-Хĕвеланăç енчи участокĕсенчен пĕринче пирĕн штурмовой авиаци нимĕҫсен 43 танкне пĕтерсе тăкнă. Фронтăн тепĕр участокĕнче пирĕн авиаци 8 танк, 7 зенитнăй оруди, 35 грузовой автомашина тата горючи тултарнă цистерна пĕтерсе тăкнă.

Белофинсен часĕсене хирĕç пулса иртнĕ çапăçура Хрявин капитанăн отрячĕ противник салтакĕсемпе офицерĕсене 150 çын пĕтерсе тăкнă, 7 пулемет, 1000 ручной граната, 12 пин патрон тата штабри кирлĕ документсене тытса илнĕ.

* * *

Каменец-Подольск облаҫĕнчи нумăйăш районсенче партизансем шоссе çулĕсем тăрăх çӳрессине йăлтах хăйсем контроллесе тăраҫҫĕ. Нимĕҫсен хăшни обозах ирĕксĕрех бронемашинăсемпе сыхласа пыма тивет.

Г. юлташ ертсе пыракан партизансен отрячĕ Проскурово хулинче тăракан нимĕç гарнизонĕ валли боеприпассем тиенĕ пысăк обоз пыни çинчен пĕлнĕ. Партизансем засада тунă. Нимĕҫсен малта пыракан бронемашини мина çине пырса тăрăннипе стройран тухнă. Бронемашина экипажĕ тарма тытăннă, анчах ăна пĕтерсе тăкнă. Охрана вăйлă пулнине пăхмасăрах, 29 автомашинăна вут чĕртсе янă. Каялла чакнă чухне партизансен отрячĕ çул çине халлех минăсем лартса хăварнă. Партизансемпе кĕрешме тесе янă нимĕҫсен карательнăй отрячĕ минăсем лартса тухнă участок çине пырса лекнипе пысăк сухатусем тӳснĕ. Партизансем пĕр кун хушшинче 41 салтака тата икĕ унтер-офицера пĕтерсе тăкнă.

Электростанци начальникĕ З. юлташ командир пулса ертсе пыракан партизансен отрядне таврара пурте лайăх пĕлсе тăраҫҫĕ. Çак отрядри партизансем сентябрь уйăхĕнче пиллĕк кун хушшинче 20 километр тăршшĕ телефон пралукĕсене сӳтсе тăкнă, 5 кĕпере взрыв туса аркатнă, çар составне крушени тунă тата нимĕҫсен 50 салтакне ытла пĕтерсе тăкнă.

* * *

Вунпар çын ĕçсыннисем темиçе тĕрлĕ профессисене вĕренсе алла илнĕ, вĕсем фронта тухса кайнă юлташĕсем вырăнĕнче ăнăçлăн ĕçлеҫҫĕ. Горькинчи В. М. Молотов ячĕпе тăракан, автомобольсем туса кăларакан заводăн пресс цехĕнчи стахановка Елена Борякова тăватă специальноçа вĕреннĕ, халĕ вăл электросварщица, прессовщица, сверловщица тата наждачница ĕçĕсене туса пыма пултарать. «Первая речка» станцинчи вагонсем юсакан пунктра ĕçлекен слесарь Наводничий юлташ çĕнĕрен виçĕ специальноçа—платник, кровельщик тата электросварщик специальноçĕсене вĕренсе алла илнĕ. Мариупольри заводсенчен пĕринче котельнăй мастерăн Христенко юлташăн бригади автогеннăй резкăпа электросваркăна халĕ хăех тăвать. Бригадăри котельщиксем Иванченко тата Кривенов юлташсем автогенщик профессине вĕренсе алла илнĕ. Хурçă шăратакан цехри старший мастерсен Шевченко тата Шмаков юлташсен сменисенчи рабочисем пурте виçĕ специальноçа пĕлеҫҫĕ. Мускаври Менжинский ячĕпе тăракан заводра клепальщик Колчин юлташ вăрçă пуçланнăранпах подручнăйсăр ĕçлет тата ĕç нормине кашни кунах ирттерсе тултарать. Ярославль станцинчи депора Корнилов юлташăн паровозĕ çинче ĕçлекен пĕтĕм коллектив вăрçă пуçлансанах слесарь специальноçне вĕреннĕ. Красноярск станцинчи мĕнпур çамрăк работницăсем иккĕмĕш специальноçа вĕренсе алла илеҫҫĕ. Нумайăшĕ стрелочниксем, сигнальщиксем тата станцинчи дежурнăйсем пулма хатĕрленеҫҫĕ.

Сентябрĕн 24-мĕшĕнчи ирхи пĕлтерӳ

Сентябрĕн 24-мĕш ыран тенĕ чух çĕрле пирĕн войскăсем пĕтĕм фронтра противника хирĕç çапăçнă.

* * *

Хĕвеланăç енчи участокĕсенчен пĕринче пирĕн часĕсем нимĕç салтакĕсемпе офицерĕсене 450 çын, орудисен батарейине тата 10 автомашинăна пĕтерсе тăкнă. Тытса илнĕ трофейăсем хушшинче—тĕрлĕрен калибрлă 10 оруди, 11 миномет, 9 станковăй пулемет, 12 ручной пулемет, 59 автомат, темиçе пин артиллери снарячĕсем, 3.900 мина, боеприпассемпе снаряженисем нумай.

* * *

Возников юлташăн танковăй подразделенийĕ çĕрлехи çапăçура нимĕҫсен танк колоннине çĕмĕрсе тăкнă тата перçе çĕмĕрнĕ 20 танкпа юсавлă 16 танка тытса илнĕ. Противникăн 117 салтакĕпе офицерĕ тыткăна парăннă. Перçе çĕмĕрнĕ машинăсенчен пĕринче нимĕҫсен 249-мĕш танковăй бригада штабĕн документĕсене тупнă.

* * *

Одесса патне пымалли çулсем çинче пирĕн войскăсем Румынин нумаях та пулмасть çĕнĕрен пуҫха йĕркеленĕ 13-мĕшпе 15-мĕш пехотнăй дивизисен часĕсене çĕмĕрсе тăкнă. Пирĕн боецсем йывăр орудисен икĕ батарейине, 100 пулемет, миномĕтсемпе боеприпассем нумай тытса илнĕ. Трофейăсене пухасси тата вĕсене шутласси малалла пырать.

* * *

Тинĕс авиацийĕн летчикĕсем сентябрĕн 22-мĕшĕнче противникăн 13 самолетне перçе антарнă тата тăшман аэродромĕ çине пырса тапăннă чухне 10 самолет пĕтерсе тăкнă. Ленинград патне пымалли çулсем çинче Хĕрлĕ ялавлă Балтика флочĕн тинĕс авиацийĕнчи бомбардировщиксен группи нимĕҫсен зенитнăй икĕ батарейине, 11 зенитнăй пулеметне, 14 бронемашинине тата 8 орудине пĕтерсе тăкнă. Хура тинĕс флочĕн авиацийĕ тăшман аэродромĕсем çине пырса тапăннă чухне противникăнне 11 самолет пĕтерсе тăкнă.

* * *

Учитель М. юлташ командир пулса ертсе пыракан, Одесса облаҫĕнче çапăçакан партизансен отрячĕ нимĕҫсен часĕсем çине чылай хутчен хăюллăн пыра-пыра тапăннă. Нумаях та пулмасть У. салинче 50 салтакран тăракан нимĕç мотопехотин отрячĕ пырса чарăннă. Фашистсем хресченсене çаратнă тата вĕсенчен пур майсемпе те мăшкăлланă. Çĕрле партизансем хăйсен командирĕпе пĕрле пырса, часовойсене шăпăн вĕлернĕ те, салана çĕмĕрсе кĕнĕ. Партизансем 20 салтакпа 2 офицера пĕтерсе тăкнă, 12 автомашинăна тата бензин тултарнă цистернăна вут чĕртсе янă. Партизансен аллине хĕпăшалсемпе боеприпассем нумай лекнĕ. Тепĕр темиçе кунран С. хули патĕнче партизансен отрячĕ армана вут чĕртсе янă, çав армана оккупантсем Германи çарĕ валли çăнăх авăртма тесе тырă турттарса пынă пулнă. Пушар вăхăтĕнче тĕштирă нумай çунса кайнă.

* * *

Поченски районри Семцы салине тытса илнĕ хыççăн, фашистсем ăна тĕпшипех юхăнтарса хăварнă. Пĕр ӳрт патĕнче нимĕç салтакĕсем патронсен темиçе гильзине тупнă. Бандитсем ӳрте çĕмĕрсе кĕнĕ те, килхуçи хĕрарăмне Мария Ахроменковăна тытса урама сĕтĕрсе тухнă. Ахроменковăн аллинче кăкăр ĕмекен ача пулнă. Гитлерла каяшсем амăшĕн аллинчен пĕчĕк ачана туртса илсе пахчаналла ывăтнă, унтан мĕскĕн амăшне те перçе вĕлернĕ. Çав кунах нимĕҫсем Дерюгин колхозникăн куçĕ умĕнчех унăн Егор ятлă 12 çулхи ывăлне тăрмаласа тăкнă. Семцы салинчи 60 çулхи колхозник Федор Пабычев çапла калать: «Фашистла вăрă-хурахсем манăнне пăру, сысна, сурăхсене илсе тухса кайрĕç тата ултă вĕллери пылхурчĕсене аркатса тăкрĕç. Эпĕ протестлеме хăтлансан, нимĕç салтакĕсем мана кĕнесе вĕлерес патнех çитерчĕç».

Пачековка разъездĕнче фашистсем сторожа тискеррăн вĕлернĕ. Нимĕç разведчикĕсен группи ирхине ирех станцири будкăна çĕмĕрсе кĕнĕ те, сторожа допрос тума пуçланă. Нимĕҫсен ыйтăвĕсем çине ответсем лама килĕшменшĕн А. Е. Голиков сторожа хаярăн асаплантарнă. Унăн аллисене пăрнă тата аяк пĕрчи шăммисене хуҫа-хуҫа пĕтернĕ. Çак вăхăтра будка патне пырса çитнĕ красноармеецсем сторожа малалла асаплантарас ĕçе чăрмантарнă. Тарнă чухне фашистсем будкăна граната ывăтса, асаплантарса пĕтернĕ старике вĕлернĕ. Голиков патриота вырăнти халăх масар çине пытарнă. Вăл 70 çулта пулнă, 40 çул хушши разъездра ĕçлесе пурăннă.

* * *

Бельги патриочĕсем фашистла оккупантсен мероприятийĕсене пур майсемпе те чăмантарса пыраҫҫĕ. Оккупациллĕ власҫем Льеж тата Антверпен хулисенчи çар предприятийĕсенче продукци туса кăларассине ӳстерме чĕннине хирĕç ответлесе, патриотсем изделисене сахалрах тата янăх пахалăхпа туса кăларма тытăннă. Бельгин чылай хулисенче: Нивель, Гюа, Дист, Валькур хулисенче сентябрь уйăхĕнче нимĕç офицерĕсем, салтакĕсем тата Германин оккупациллĕ тĕрлĕ власҫем вырнаҫса тăракан çуртсенче пысăк пушарсем пулнă. Антверпенран çурçĕр-хĕвелтухăç енчи вăрманти пушар темиçе кун хушши вăйлăн çуннă. Пушар вăхăтĕнче вăйлă взрывсем пулни илтĕннĕ. Кайран палла пулнă тăрăх, вăрмана Бельги патриочĕсем чĕртсе янă пулнă, çав патриотсем нимĕҫсен боеприпассемпе çар материалĕсен склачĕ вырнаҫса тăнине пĕлнĕ. Нимĕç çар чаçĕсен боеприпасĕсемпе материалĕсене пĕтерсе тăкнă.

* * *

Фронт çывăхĕнчи выльăх-чĕрлĕх ĕрчетекен совхозсенчи агрономсем, зоотехниксем тата ытти работниксем аратлă выльăхсене сыхласа усраҫҫĕ. Токарево совхозĕнчи бухгалтера П. П. Клюева аратлă 205 ĕнене, вăкăра тата пăрăва шалти тыла хăваласа кайма хушнă пулнă. Илсе кайма ывăррине шăхмасăрах, выльăхсене пурне те нимĕн начарлатмасăрах çирлĕ вырăна илсе çитернĕ. Засижье совхозĕн ферма управляющийĕ Гаврилов юлташ 700 пуҫ ытла выльăха тепĕр вырăна куçарса каяс ĕçе отлично ертсе пынă. Çулăн чылай пайĕ тăшман авиацийĕ тапăнакан район урлă иртсе пынă. Выльăхсене пурне те типерех илсе çитернĕ. Аратлă выльăх-чĕрлĕх ĕрчетекен Сычевка совхозĕн работникĕсем, 750 пуҫ выльăха урăх вырăна куçарнă вăхăтра, çул çинче сĕте сепараторсемпе уйăрас ĕçе организацилеҫҫĕ. Шĕвĕ сĕчĕпе пăрусене тăрантарнă, хăймисене хăйма хатĕрлекен пункчсене панă. Посково совхозĕн работникĕ О. Н. Суровникова юлташ хаклă йышши аратлă выльăхсен кĕтĕвне урăх вырăна куçарас ĕçе ертсе пынă. Вăл выльăхсене хăрушă зонăран ăнăçлăн илсе тухса, пĕр сухату тумасăрах кирлĕ вырăна илсе çитернĕ.

Ютçĕршыв корреспонденчĕсен черетлĕ пресс-конференцийĕнче

Ютçĕршыв корреспонденчĕсен сентябрĕн 23-мĕшĕнче пулса иртнĕ черетлĕ пресс-конференцийĕнче Совет Информаци Бюровĕн начальник заместителĕ С. А. Лозовский юлташ Хĕвелтухăç фронтĕнче Германи çарĕ тӳсекен çухатусем çинчен Германири информаци бюровĕ суйласа пĕлтернисем çинче чарăнса тăнă.

Германи правительстви, тесе калать Лозовский юлташ, Хĕвелтухăç фронтĕнче пулакан чăн-чăн çухатусене Германи халăхĕнчен пытарса тăрать. Анчах та çухатусене хут çинче çеç пытарма пулать. Ашшĕсем, амăшĕсем, арăмĕсемпе йăмăкĕсем—Германири çĕршер пин çемьесем Германи çарĕн вăхăтлăха тунă тата алăран каялла тухса ӳкекен çитĕнĕвĕсене мĕнле хакпа илнине пĕлсе тăраҫҫĕ ĕнтĕ. Германи правительĕсем мĕн чухлĕ ытларах суяҫҫĕ, вăрçăн татăклă итогĕсене тунă чухне вĕсене халăх çавăн чухлĕ хаярăн ответ тыттарĕ.

Хĕрлĕ Çара пулăшаҫҫĕ

ЕТĔРНЕ. Мăн Шемертен ялсоветне кĕрекен «Ленин хушăвĕ» колхоз государство умĕнчи пур обязательствăсене те срокчен тултарчĕ. Оборона фондне 500 çăмарта, 15 килограмм çăм панă. Ку ялсоветĕнчи «Новое звено» колхоз та оборона фондне 20 килограмм çăм пачĕ. Çак колхоз колхозникĕсем оборона фондне 56 ҫĕкунĕ çине тивекен тупăна тата 150 çăмарта, 45 литр сĕт пухса пачĕç.

Н. ТИМОФЕЕВ.

РЕСПУБЛИКĂРИ УЙХИРСЕНЧЕ

11 район тырă вырса пĕтернĕ

Республикăра тырă вырса пĕтернĕ районсен шучĕ ӳссех пырать. Ку вăхăтчен Комсомольски, Хĕрлĕ Чутай, Сĕнтĕрвăрри, Чкаловски, Елчĕк, Çĕмĕрле, Шупашкар, Канаш, Ишлей, Калинински, Вăрнар районĕсем тăштырăсене пĕтĕмпех вырса пĕтерчĕç. Паянырансенче Элĕк, Красноармейски, Первомайски, Советски, Сĕнтĕр, Вăрмар, Çĕрпӳ, Шăмăршă, Етĕрне районĕсем те вырса пĕтереҫҫĕ. Чылай районсем кĕрпе тумалли тата пăрça йышши культурăсене те йăлтах çулса пуҫтарнă. Елчĕк районĕ вăрлăхлăх хăварнă куракселе те çулса кĕртрĕ.

Колхозсем кĕлтесене капана хывас тата авăн çапас ĕçсене чылай вăйлатрĕç. Пăрачкав районĕ вырса пуҫтарнă тырпула капана хывассине 89,4 процент, Калинински районĕ 87 процент, Çĕмĕрле районĕ 85,4 процент пурнăçларĕç. Апла пулин те, кĕлте кĕртес ĕçе малашне те çине тăрсах хăвăртлатса пыни кирлĕ. Ку тĕлĕшпе уйрăмăнах Шăмăршă, Чкаловски, Вăрмар, Сĕнтĕр, Первомайски тата Куславкка районĕсенчи колхозсен ытларах ĕçлемелле пулать. Çакăнпа пĕр вăхăтрах пур колхозсенче те авăн çапассине туса пымалла. Молотилкăсене пушă лартмалла мар, вĕсемпе иртен пуҫласа касченех туллин усă курма тăрăшмалла.

Кантăр татса пĕтереҫҫĕ

Сентябрĕн 20-мĕшне 17 район кантăр татса пĕтернĕ. Чылай колхозсем татса пĕтернĕ кантăр çурăмĕсене çапса типтерлерĕç. Уйрăм колхозсем государствăна кантăр вăрри парса татнă.

61.663 тонна силос хывнă

Чылай районсем силос хывас тĕлĕшпе ăнăçлăн ĕçлеҫҫĕ. Сентябрĕн 20-мĕш тĕлне Елчĕк районĕ 4.337 тонна силос хывса плана 103 процент тултарчĕ. Ситес кунсенчех Çĕмĕрлепе Чкаловски районĕсем те хăйсен планне пурнăçлаҫҫĕ.

Силос хывас ĕç иртнĕ çулхинчен лайăхрах пулса пырать. 1940 çулхи сентябрĕн 20-мĕш тĕлне республикипе 58.512 тонна силос хывнă пулсан, çав вăхăт тĕлнех кăçал 61.663 тонна хывнă.

Колхозниксем тăрăшса ĕçлеҫҫĕ

ÇЕМĔРЛЕ. Хутарти Ленин ячĕпе тăракан колхоз пур йышши культурăсене те пысăк пахалăхпа вырса пуҫтарчĕ. Уборка вăхăтĕнче Андреев юлташ бригади лайăх тĕслĕхсем кăтартса пычĕ. Ку бригада çурхи тырăсене те тахçанах капана хывса пĕтернĕ. Кĕлте кĕртес ĕçе ытти бригадăсенче те лайăх йĕркеленĕ. Комсомолецсем пуçарнипе кăçхине те кĕлте кĕртнĕ. Капан тунă çĕрте колхозри ватă колхозниксем (П. Блинов, Д. Тихонов, Т. Яковлев) ĕçленĕ. Вĕсем кулленех 100 лав таран кĕлте капана хывнă.

Колхозра халь пур бригадăсенче те авăн çапаҫҫĕ тата тахча-симĕҫсене пуҫтарса кĕртнĕ çĕрте ĕçлеҫҫĕ.

С. БАТЬКОВ.

Выльăх апачĕ

КОМСОМОЛЬСКОЕ. «Красный боец» колхоз обществăллă выльăх-чĕрлĕх валли кирлĕ тараван силос хывса хăварчĕ. План тăрăх колхозăн 80 тонна силос хывмалла пулнă пулсан, вĕсем 82 тонна хывнă. Колхозниксем халь иккĕмĕш хут ӳснĕ куракселе çулса типтеҫҫĕ.

Çавăн пекех «Светлая жизнь» колхоз та çуркунне валли 40 тонна силос хывĕ тата 35 лав çулçăллă турат касса хатĕрленĕ.

Н. ВИНОГРАДОВ.

Сахăр туса кăларас ĕçĕн сезонĕ пуçланнă

ВОРОНЕЖ, сентябрĕн 23-мĕш. (ТАСС). Облаҫри сахăр завочĕсем производствăн çĕнĕ сезонне пуçланă. Ольховатски завод пĕрремĕш партине ĕçлесе 3,5 пин центнер сахăр кăларнă. Нижне-Кисляйски завод пирвайхи продукци туса кăларнă.

ТБИЛИСИ, сентябрĕн 23-мĕш. (ТАСС). Агаринскри сахăр завочĕ ĕçлесе кăларма кăçал пухса илнĕ кăшмана йышăнма тытăннă. Кăшмана завод склачĕсене татти-сыпписĕрех илсе пыраҫҫĕ. Халĕ 20.000 центнер ытла турттарса килсе панă. Хатĕрлесе кăларнă продукцине ăсатма тытăнаҫҫĕ.

ЕРЕВАН, сентябрĕн 23-мĕш. (ТАСС). Арменин сахăр кăшманĕ ӳстерекен районĕсенче сахăр кăшманĕ кăларасси массăллăн пырать. Дузкендски районри Тапарлы, Малый Караклис, Оджахкулн ялĕсенче приемнăй пункта кăшманăн малтанхи вунпар тоннисене илсе пынă. Кĕçăлхи кăшманăн тухăçлăхĕ пĕлтĕрхинчен 50—60 процент ытларах.

Отечественнăй аслă вăрçăн фрончĕсенче

☆

Швецов летчикăн хăюллă ĕçĕсем

Летчик хĕçĕн лейтенант Швецов тăшман тылне разведкăна вĕçсе кайма приказ илнĕ. Швецов колташ хăйĕн экипажĕпе пĕрле часах фронт линийĕ урлă вĕçсе каçнă. Совет летчикĕсем çӳлтен, хăвăрт вĕçсе пынă.

Аялта шоссе чăсăлса выртнă. Çав шоссе тăрăх фашистсен автоколонни фронт еннелле шунă. Унтан инçех мар чугунçул станцийĕ. Станци тупăсем, автомашинăсем, снарядсем, бомбăсем тиенĕ эшелонпа тулса ларнă. Станцирен инçех мар вăрман, унта фашистсен аэродромĕ. Тăшман совет самолечĕсем инçетри тыла вĕçсе пырасса кĕтмен пулнă. Совет разведчикĕсем çавсене йăлтах ӳкерсе илнĕ. Командовани патнă задачине пурнăçа кĕртнĕ.

Швецов каялла хилме хăйĕн часĕ анне çул тытнă. Çав самантра радист фашистсен виçĕ самолечĕ хыçалтан хăвалани çинчен пĕлтернĕ. Самолет пĕлĕтсем хушшине кĕрсе пытаннă. Фашистсем совет самолечĕсене куçран çухатнă.

Фронт линийĕ патне çитме инçех юлман. Фашистсен 6 самолечĕ сиксе тухнă. Пĕччен улттăна хирĕç! Çапăçу çăмăлах мар. Мĕнле те пулсан çĕлăнса тухса разведкăра пухнă сведенисене хамăр часа илсе çитермелле. Сталинла соколсем çухалса каймăн, хĕрӳллĕ çапăçу пуçланнă. Стрелок тăшманăн икĕ самолетне персе антарнă, виççĕшĕ çаплах атакăланă.

Швецов çав тери чаплă маневр туса çĕрелле çиçĕм пек хăвăрт аннă. Унтан çĕр çумминпе вĕçсе çĕлăнса тухнă. Малалла нумаях вĕçмен. Швецов юлташ тăшман тылĕнче совет самолечĕ ларнине курнă. «Совет самолечĕ, юлташсенпе çăлмалла», тенĕ вăл. Швецов анса ларнă. Ана хирĕç хăйсен часĕнчи лейтенант Бернйков чупса пынă. Вăл та разведкăна вĕçсе тухнă пулнă, анчах тăшманăн зенитчикĕсем персе самолета вут тивертнĕ пирки, унăн ирĕксĕрех анса лармалла пулнă. Нумай калаçса тăман, Швецов вĕсен мĕшĕр приборĕсемпе фотоаппаратне, пухнă сведенисене тата экипажа хăй çине илнĕ те сывлăша вĕçсе хăпарнă.

Çав кунах, каçа хирĕç, пирĕн бомбардировщиксем, разведка патнă сведенисем тăрăх, тăшман тылне кайса пиншер килограмм бомбăсем тăкнă. Фашистсен автоколоннине, эшелонне тата аэродромне пĕтерсе хунă.

А. ФИЛИППОВ.

Действующи арми.



ДЕЙСТВУЮЩИ ФЛОТ. **Укерчĕк çинче:** Н-ски каралăн торпедисчĕсем (сулахайран сылтăмалла): В. Е. Панасенко, В. И. Болотов тата А. Н. Гусев торпеда аппарачĕ умĕнче.

Е. Халдей фотоӳкерчĕкĕ (ТАСС фотохроники)

Хăюллă та паттăр медсестрасем

Мельников юлташ командир пулса ертсе пыракан батальонри медсестрасем аманнă боецсене пулăшу парас çĕрте хăйсен хăюллăхĕпе паттăрлăхне хăтартса ĕçлеççĕ. Вĕсем хушшинче Чăваш республикинчен килнĕ хĕрачасем те чылай.

Шупашкар больницинче ĕçленĕ комсомолка Нина Яковлевна Елисеева юлташ вăрçăн малтанхи кунĕсенчен пуçласах фашизма хирĕç хăюллăн тата паттăррăн çапăçать. Пĕрреххинче вăл çакăн пек кулăшла япала çинчен каласа панă:

— Шмельков боецпа пĕрле мана разведкăна ячĕç. Вăрман тăрăх кайрăмăр, кайсан-кайсан вăрман хĕрне тухрăмăр. Пирĕн умра пĕр пӳрт ларать. Çав пӳрт умĕнче хур уткаласа çӳрет.

Шмелькова пӳрт умĕнчи хура кайса тытма хушрăм. Шмельков хыпăнма пуçа пӳрт патне çитрĕ те, тĕплĕн тĕрĕслесе пăхрĕ. Никам та çук пулас, мана пӳрнепе кăчăх туртрĕ.

— Никам та çук, — тет вăл.

— Апла пулсан, çав хура тытса хиль-ха, — терĕм.

Шмельков хура тытрĕ те мана пата пычĕ. Мăн çул çине тухрăмăр. Хура уринчен сыхрăмăр та çул çине ятăмăр. Хамăр пытанса выртрăмăр. Вăхăт нумаях иртмерĕ. Çул тăрăх фашистсен икĕ мотоциклисчĕ килнине куртăмăр. Хур патне çитсенех вĕсем чарăнчĕç те, ăна хăвалама тытăнчĕç. Пĕр фашисчĕ хура хӳререн ярса тытма хăтланнă вăхăтра эпĕ ăна ярса тытрăм. Çав вăхăтра ман Шмельков тепĕр фашиста пуçран прикладпа çапса ӳкернĕ. Ытларах çапнă пулас, пуçĕ çурăлсах кайнă.

Çапла, фашистсем хур ашĕ çиеймерĕç, пĕри хур выранне хăйĕн пуçне хучĕ, теприне штаба илсе кайрăмăр.

М. ЛЬВОВ.

Действующи арми.

Фашистсене хурпа илĕртсе тытрăмăр

Боец Кузьма Иванович Ветерков отечественнăй вăрçăн малтанхи кунĕсенчен пуçласах фашизма хирĕç хăюллăн тата паттăррăн çапăçать. Пĕрреххинче вăл çакăн пек кулăшла япала çинчен каласа панă:

— Шмельков боецпа пĕрле мана разведкăна ячĕç. Вăрман тăрăх кайрăмăр, кайсан-кайсан вăрман хĕрне тухрăмăр. Пирĕн умра пĕр пӳрт ларать. Çав пӳрт умĕнче хур уткаласа çӳрет.

Шмелькова пӳрт умĕнчи хура кайса тытма хушрăм. Шмельков хыпăнма пуçа пӳрт патне çитрĕ те, тĕплĕн тĕрĕслесе пăхрĕ. Никам та çук пулас, мана пӳрнепе кăчăх туртрĕ.

— Никам та çук, — тет вăл.

— Апла пулсан, çав хура тытса хиль-ха, — терĕм.

Шмельков хура тытрĕ те мана пата пычĕ. Мăн çул çине тухрăмăр. Хура уринчен сыхрăмăр та çул çине ятăмăр. Хамăр пытанса выртрăмăр. Вăхăт нумаях иртмерĕ. Çул тăрăх фашистсен икĕ мотоциклисчĕ килнине куртăмăр. Хур патне çитсенех вĕсем чарăнчĕç те, ăна хăвалама тытăнчĕç. Пĕр фашисчĕ хура хӳререн ярса тытма хăтланнă вăхăтра эпĕ ăна ярса тытрăм. Çав вăхăтра ман Шмельков тепĕр фашиста пуçран прикладпа çапса ӳкернĕ. Ытларах çапнă пулас, пуçĕ çурăлсах кайнă.

Çапла, фашистсем хур ашĕ çиеймерĕç, пĕри хур выранне хăйĕн пуçне хучĕ, теприне штаба илсе кайрăмăр.

М. ЛЬВОВ.

Действующи арми.

Тăшман тылĕнче

Тăшман хăяр та чее. Эпир унран та чеерех.

Пирĕнтен аяххах мар снарядсем пырса ӳксе çурăлаççĕ. Йĕпенсе пылчăкланнă ыраш ани тăрăх шуса малалла куçса пыратпăр. Пуçа çĕклеме май çук. Анчах совет воинĕсемшĕн нимĕн те хăрушă мар. Ял патне çывхарса çитрĕмĕр.

Ял хушшинче ĕнесем мĕкĕрни, хĕрарăмсемпе ачасем макăрни илтĕнчĕ. Акă пирĕн умри пĕр пӳрт умĕнче 4—5 сулхи хĕрача вилнĕ амăшĕн кăкăрĕ çинне пуçне хурса макăрса ларать.

Мотор сасси илтĕнсе кайрĕ, пире хирĕç фашистсен танкĕ килет. Гранатăсене хатĕрлесе тытрăмăр. Вĕсене малта пыракан танк çине ывăтрăмăр. Танкăн бензин бакне вут хыпса илчĕ...

Ял кĕтĕмĕр, пахчасем урлă каçса тăмран тунă сарай хыçне пытанса выртрăмăр. Тăшман штабне хăш енчен пырса çапсан аванрах пуласси çинчен шухăшлатпăр. Ман умра икĕ пысăк задача: отделенири кашни боеца сыхласа хăвармалла тата тăшманăн штабне çĕмĕрсе тăхмалла.

Çăмăр чарăнчĕ, хĕвел каç еннелле сулăннă. Нумай шухăшласа тăмалла мар, вăхăт хаклă. Отделенине икĕ пая уйăртăм та, кашнине задани патăм.

Пирĕн умра фашистсем тунă каллех тепĕр тискер ĕç: тăман тунă виçĕ пӳлĕмлĕ шурă пӳрт, йĕри-тавра улмуççисем, ывăççем айĕнче пĕр пысăк арча çинче тăватă офицер тайкаланса лараççĕ. Вĕсен умĕнче хĕрарăм çакăнса тăрать. Унпа юнашар икĕ старике йывăç çумне сыхса лартнă, офицерсем темĕскер ыйтаççĕ, пĕрне пырса çапаççĕ те хăйсем сулкаланса каялла кайса лараççĕ.

Боец Кириллов ман пата пычĕ те:

— Командир юлташ, яр мана, халех офицерсене пурне те чиксе пăрахатăп, терĕ.

Приказ патăм.

Кириллов юлташ вĕсем патне кайрĕ те икĕ офицера штыкпа чиксе пăрахрĕ, иккĕшĕ тарма тытăнчĕç, анчах тарайма-рĕç, вĕсене пулеметран персе сулса пăрахрăмăр.

Фашистсем пирĕн çине пӳртрен пеме тытăнчĕç. Манăн сылтăм ура кăвар пек пĕçерсе кайрĕ, вĕри юн тапса тухрĕ. Анчах ун пек чухне ачашланса тăма вăхăт çук. Пиллĕкĕн пĕр харăс пӳрт чӳречине гранатăсем ывăтрăмăр. Тăшмансен йăви саланса сывлăша вĕçрĕ.

Командовани приказне чыслăн пурнăçларăмăр.

Эпир вилĕмрен çăлса хăварнă шур сухалли старик манăн суранланнă ура-на сыхма пулăшрĕ тата пире питĕ те кирлĕ хыпарсем пĕлтерчĕ. Унтан вăл алла пăшал тытрĕ те пирĕнпе пĕрле утрĕ.

Отделени командирĕ С. УШАКОВ.

Действующи арми.

Одесса геройĕсем

ОДЕССА, сентябрĕн 23-мĕш. (ТАСС). Пиншер коммунистсемпе комсомолецсем Одессăна хӳтлекенсен малти речĕсенче хăйсен пурнăçне шеллемесĕр çапăçаççĕ тата хăйсен примерĕпе красноармеецсемпе краснофлотецсене тăшмана çĕмĕрсе тăкма хавхалантарса пыраççĕ. Комиссар Василий Артемович Клименко çапăçун татăклă саманчĕсенче яланах малта. Çак кунсенче вăл батальона атакăна илсе кайнă. Противник тăвăллăн персе тăнă. Йĕриташра минăсемпе снарядсем çурăла-çурăла кайнă. Комиссар малта пынă, боецсем тăраса ӳкмен. Подкреплени илнĕ хыçăн, противник батальона хупăрласа илме хăтланнă. Клименко хăйĕн боецĕсене штыксемпе тăвакан атакăна илсе кайнă. «Тăван çĕршывăн! Сталинăн!» —тесе кăшкăрнă комиссар. Çавтери хăватлăн та хăвăрт кĕссе пынине, пирĕнисем çавтери вăйлăн пырса çапнине тăшман тӳссе тăма пултарайман, вăл каялла тарнă.

Коммунист Леонид Таран ертсе пыракан мухтавлă танкистсем хăюллăн çапăçаççĕ. Нумаях та пулмасть пĕр çапăçура Таран танкĕсем тăшман салтакĕсемпе офицерĕсене 500 çынна яхăн пĕтерсе тăкнă. Хăрушлăха пăхмасăрах, тăшмана хирĕç пыракан çапăçура çĕнтерӳ тумалла—коммунист Таран хăйĕн экипажне çакăн пек воспитани парса вĕрентет.

Нумаях та пулмасть пулса иртнĕ çапăсусенчен пĕринче артиллерист комсомолец Якунин, противник танкĕсене курнă та, хăйĕн орудине уçă позицине илсе тухса тӳрĕ наводкăран пеме тытăннă, темиçе минута хушшинчех тăшманăн 4 танкне пĕтерсе тăкнă.

Противотанковăй орудин командирне комсомолец Павел Фирсова тăшман танкĕсен аçа-çиçĕмĕ тесе чĕнеççĕ. Пĕрехинче противник сарăлса кайнă стройпа пирĕн часа хирĕç 25 танк кăларса янă. Хăвăрт решени йышăнмалла пулнă, вара Фирсов сылтăм флангра пыракан командир танкне пĕтерсе тăкма шутланă. Тĕл персе тивертнипе командир танкне персе çĕмĕрнĕ. Иккĕмĕш хут персен вăл çунма пуçланă. Тăшман танкĕсем малалла куçса пырасси шанчăксăр пулса тăнă. Татах икĕ танка вут хыпса илнĕ. Фирсов пуçланă вĕçе пирĕн гранатăсем вĕçленĕ — тăшманăн атакине сирсе янă.

Противотанковăй орудин командирĕ тĕрĕс решени йышăнни тата вăл хăюллă пулни çапăçу мĕнпе вĕçленнине татса панă. Комсомолец Фирсов хăйĕн тивĕçлĕхне пурнăçа кĕртнĕ.

Тепĕр çапăçура Матюхинăн орудине расчетне тăшман хупăрласа илсен, Фирсов хăйĕн орудине хăвăрт çавăрнă та тăшман çине осколочнăй снарядсемпе пеме тытăннă. Фирсов хăйĕн юлташĕсене пулăшнă: хупăрласа илнĕ çĕртен Матюхин хăйĕн боецĕсемпе чиперех тухнă.

Одессăна геройла сыхланă çĕрте Хура тинĕс морякĕсем хăйсене нихăçан манми мухтавна витрĕç. Вĕсен паттăр та хăюллă ĕçĕсем çинчен пĕтĕм çĕршыв пĕлсе тăрать. Вĕсен мухтавлă списокĕ çумне татах тепĕр героя хушăпăр. Краснофлотец коммунист Кравченко противник танкĕ патне йăпшăнса пырса, ăна гранатăсен сыххисемпе пĕтерсе тăкма задани илнĕ. Вăл çапла тунă та. Вăл танк патне нимрен хăрамасăр шăвăнса пырса, ăна пĕтĕм экипажĕпе пĕрлех пĕтерсе тăкнă.

Батальонăй комиссар

А. АБРАШКЕВИЧ.

* * *

Взвод командирĕ Кабанов связиста кабель илме янă. Каçмалли вырăнтан тытăнса, малалла çурăнмалли çулпа каймалла. Фашистсем калама çук сăйлăн персе тăнă.

Персе тăнине пăхмасăрах, Кабанов пĕрмаях малалла утнă. Сасартăк вăл, артиллеристсем вăйлă персе тăнă хушăрах, çул çинче автомашина ларнине курать. Машина патĕнче шофер тем-скер тăрмашнă.

— Мĕшĕн чарăнса тăтăн?—ыйтнă Кабанов шофертан.

— Горючи параканни пăсăлнă.

— Машина мĕнпе?

— Минăсемпе.

— Давай машинăна ăксĕмĕр тӳрлетĕпĕр,—тенĕ Кабанов.

Осколоксем пăр пек çуса тăнă хушăра боецсем мотор мĕнле ĕçленине тĕрĕслеме пуçланă. Тăшман вут-хĕмĕ айĕнче, взрыв пулакан япаласем тиенĕ машина патĕнче вунпиллĕк—çирĕм минута хушши пуласси—вăл кунçула татса панă вăхăт. Кашни секундăрах вилĕм пулма пултарать. Апла пулсан та Кабановпа шофер хăрушлăха пăхмасăрах ĕçленĕ. Юлашкинчен, машина ĕçлеме пуçларĕ. Шофер газ патне, вара машина вут-хĕм айĕнчен тапранса, тĕмсем хушшинче çухалчĕ.

Кабанов хăйĕн маршручĕпе малалла кайрĕ.

Старший политрук **А. ЗАМОРИН.**

Действующи арми.

Редакцирен: Çак статьяра асăннă взвод командирĕ Виктор Федорович Филиппов юлташ фронта тухса кайичен Шупашкарти пединститутра ĕçленĕ. Вăл паллă физкультурник пулнă.

Хĕрлĕ Çар боецĕсем валли— йăшă туттирсем

ИШЛЕЙ. Сентябрĕн 22-мĕшне районĕпе 12 мăшăр çăматă, 815 килограмм çăм, 1223 сурăх тирĕ, 1010 метр пир, 26 йăшă кĕпе, 40 мăшăр перчатка, 66 мăшăр носки, 151 алшăлли, 60 мăшăр аялтан тăтăнмалли кĕпе-йĕм, 55 çĕлĕк, 46 минтер пичĕ тата ытти япаласем пухăннă.

Районри колхозсенче пуринче те Кольцовкăри Сталин ячĕпе тăракан Ленин орденлĕ колхоз членĕсем тата хамăр районри Мамăш ялсоветĕнчи «Коммунист» колхоз членĕсем Хĕрлĕ Çар валли йăшă япаласем пухас тĕлĕшпе чĕнсе калаçнине сӳтсе-явнă. Халĕ районри колхозсемпе учрежденисенче пур çĕрте те йăшă япаласем пухаççĕ. Шетмĕпуç ялсоветĕнчи «Çĕнĕ Хунав» колхозра 20 сурăх тирĕ, 23 килограмм çăм, пĕр алшăлли, «Çăлтăр» колхозра—24 сурăх тирĕ, 23 килограмм çăм, 5 мăшăр портянка, пĕр алшăлли, 2 носки пухнă. Кшавăшри «Осоавиахим» колхозра 12 сурăх тирĕ, 42 килограмм çăм, 16 метр пир пухăннă.

Ишлей ялсоветĕнчи «Социализм» колхозра Андрей Малютин пĕр сурăх тирĕ, 500 грамм çăм Хĕрлĕ Çар валли тата 135 тенкĕлĕх заем облигацийĕсене оборона фондне, Михаил Мясников Хĕрлĕ Çар боецĕсене валли пĕр мăшăр бурки тата пĕр кĕрĕк пиншак панă. Хатăкри колхоз членĕсем Анна Кузнецовăпа Григорий Медяков пĕрер мăшăр çăматă пачĕç.

Ф. САЗОНОВ.

ВКП(б) Ишлей райкомĕн секретарĕ.

* * *

ИШЛЕЙ. Анат-Кĕнер ялсоветне кĕрекен «Прожектор» колхоз членĕсем Хĕрлĕ Çар боецĕсем валли йăшă тумтирсем пухас параççĕ. С. Толстов, Е. Мочалов, И Разумов колхозниксем пĕрер тир пама пулчĕç. Е. Потянова 750 грамм çăм. М. Толстовăпа В. Алексеева юлташсем 500-шер грамм çăм пачĕç. Йăшă тумтирсене пухас ĕç сарăлсах пырать.

В. ВОРОНОВ.

* * *

ЕТĔРНЕ. Хĕрлĕ Çар валли çи-пуçа тăхăнмалли йăшă япаласем пухас тĕлĕшпе Полянка ялсоветĕн председателĕ Горбунов юлташ хытă тăрăшать. Киров ячĕпе тăракан колхозра вăл 81 сурăх тирĕ, 250 килограмм çăм тата ытти япаласене те пухнă.

Предприятисенче, учрежденисенче, колхозсенче йăшă япаласем пухас ĕç анлăн сарăлса кайнă май сентябрĕн 22-мĕшне районри склада 990 килограмм çăм, 1054 тир, 237 мăшăр перчатка-алшиш, 166 мăшăр носки, 92 çĕлĕк, 11 мăшăр çăматă, 7 шлем, ваттă хурса çĕленĕ 13 пиншак, 4 кĕрĕк пиншак, 114 алшăлли, 33 мăшăр портянка, 447 метр пир, 14 шарф, 5 башлык, 16 йăшă кĕпе, ваттă хурса çĕленĕ 14 шаровар тата ытти япаласем те пухăннă.

В. АКИМОВ.

ВКП(б) Етĕрне райкомĕн секретарĕ.

* * *

ЕТĔРНЕ, сентябрĕн 23-мĕш. **(Телефон тăрăх).** Хĕрлĕ Çар боецĕсем валли йăшă тумтирсем пухас тĕлĕшпе ĕçлекен районри комисси 11 мăшăр çăматă, 237 мăшăр çăмран сыхнă алса, 17 фуфайка, 166 мăшăр çăм носки, ваткăллă брюки 14 штука, 4 полушубок, 783 тир тата 1990 килограмм çăм пухнă.

«Хĕрлĕ Октябрь» колхоз членĕсем 49 тир, 10 килограмм çăм, 20 метр портянка пухса пачĕç. Колхозниксем йышăннипех «Хĕрлĕ Октябрь» колхоз 3 тонна тĕштырă, пĕр вăкăр тата 1000 тенкĕ уçăн панă. Çавăн пекех «Красноармеец» колхоз членĕсем те Хĕрлĕ Çар боецĕсем валли 30 килограмм çăм, 50 килограмм пыл, 100 мăшăр çăм носки тата икĕ гектар çинчен пухса кĕртнĕ тырпула панă.

И. ЛЬВОВ.
Е. ПЕТРОВ.

* * *

ЕТĔРНЕ. Урапакассинчи «Правда» колхоз членĕсем Хĕрлĕ Çара йăшă туттирсем парса пулăмас ĕçе чĕре тулли кăмăлпа йышăнчĕç. 60 сулхи ваттă колхозник Иван Ватрaскин юлташăн икĕ ывăлĕ фронтра. Вăл Хĕрлĕ Çар боецĕсем валли 2 тир пачĕ. Михайлова юлташ пĕр çăматă, Мурзина юлташ пĕр мăшăр перчатка, пĕр мăшăр чулха, пĕр çĕлĕк пачĕç. Ытти колхозниксем те кашнисех Хĕрлĕ Çар валли йăшă туттирсем параççĕ. «Правда» колхоз 5 килограмм çăм пама пулчĕ тата оборона фончĕ валли 200 çăмарта, 5 килограмм ĕне çăвĕ пачĕ.

В. ЛАЗАРЕВ.

* * *

КРАСНОАРМЕЙСКОЕ. Мартынкасси ялсоветне кĕрекен «Чăваш Коммуни» колхоз членĕсем Хĕрлĕ Çар боецĕсем валли йăшă туттирсем çĕлеме 14 тир, 14 метр пир тата колхоз фондĕнчен 12 килограмм çăм панă.

П. ЕФРЕМОВ.

* * *

ÇЕРПУ. «Прожектор» колхоз членĕсем Шупашкар хулинчи Ленин ячĕпе тăракан фабрикăри рабочисемпе работницăсен чĕнĕвне сӳтсе-явнă хыççăн, пурте пĕр сасăллă пулса, Хĕрлĕ Çар боецĕсем валли йăшă туттирсем пама пулчĕç. Колхозницăсем А. Федоровăпа И. Григорьева юлташсем пĕрер мăшăр носки, алшиш сыхса пама пулчĕç. Колхозниксем пурĕ 11 мăшăр носки, 9 мăшăр перчатка, 2 алшăлли, пĕр мăшăр портянка, пĕр тир пама пулчĕç. Кунсăр пуçне колхоз 7 мăшăр çăматă, 5 тир тата оборона фондне пĕр тонна ыраш, пĕр вăкăр пама пулчĕ.

З. ЕГОРОВ.

КАЛИНИНО. Сентябрĕн 20-мĕшне районĕпе 800 килограмм çăм, 600 сурăх тирĕ, 13 мăшăр çăматă, 61 çĕлĕк, 1 кĕрĕк, 6 мăшăр йăшă кĕпе-йĕм, 86 мăшăр портянка тата ытти япаласем те пухăннă.

Анатри Кăкăнар—пĕчĕк ял. Ку ялта колхозăн пĕр бригада анчах. Çапах та унти колхозниксем 13 килограмм çăм, 12 сурăх тирĕ, 7 çĕлĕк, 2 алшăлли, 2 мăшăр портянка пачĕç.

Ельмен ялĕнчи Пушкин ячĕпе тăракан колхозра 61 килограмм çăм, 21 сурăх тирĕ, 2 мăшăр перчатка, 25 метр пир тата ытти япаласене те пухăннă.

Кушăр Юнтала ялĕнчи Кагановичăн ячĕпе тăракан колхоз членĕсем 37 сурăх тирĕ, 28 килограмм çăм, 3 çĕлĕк, 7 алшăлли, пĕр кĕрĕк панă.

Туçи Мăратри «Клевер» колхозра 26 килограмм çăм, 36 сурăх тирĕ, 2 мăшăр йăшă кĕпе-йĕм, 8 алшăлли, 3 мăшăр портянка тата пĕр минтер пичĕ пухăннă.

Йăшă япаласем пухас ĕç сарăлсах пырать.

Г. СКВОРЦОВ.

ВКП(б) Калинински райкомĕн секретарĕ.

* * *

СОВЕТСКОЕ. Йăшă туттирсем пухас тĕлĕшпе уйрăмах Хучаш ялсоветĕн председателĕ М. Яковлев юлташ тимлĕн ĕçлет. Çак ялсоветне кĕрекен колхозсенче Хĕрлĕ Çар валли йăшă япаласем пуçтарасси çинчен колхозниксене пурне те ăнлантарса панă. Çавна май, кунта кашни колхозникех кирек мĕнле йăшă япала та пулсан тупса пама тăрăшать. «Хĕрлĕ Хучаш» колхозра 4 кĕрĕк пиншак, 7 мăшăр çăматă, 10 мăшăр алшиш, 10 мăшăр носки, 9 мăшăр ураташ, 6 çĕлĕк, ваттă хурса çĕленĕ пĕр шаровар, 6 алшăлли, 15 мăшăр портянка, 3 мăшăр аялтан тăхăнмалли кĕпе-йĕм, пĕр фуфайка, 7 алса пухнă.

Сентябрĕн 22-мĕшне районĕпе 36 кĕрĕк пиншак, 571 сурăх тирĕ, 238 мăшăр çăматă, 800 килограмм çăм, 913 мăшăр перчатка, 763 мăшăр чулха-носки, 43 мăшăр тăла, 326 мулаххай, 9 шаровар, 6 фуфайка, 62 алшăлли тата ытти япаласем те пухăннă.

Г. МИХАЙЛОВ.

ВКП(б) Советски райкомĕн секретарĕ.

* * *

ÇЕМЕРЛЕ. **(«Чăваш Коммуни» корр.).** Райпотребсоюз работникĕсем, пурте пĕр сын пек пулса, Хĕрлĕ Çар боецĕсене йăшă туттирсем парса пулăшаççĕ. Ку тĕлĕшпе ыйту актив пример кăтартса пырать. Комсомол пуçламăш организацин секретарĕ К. Куликова икĕ мăшăр носки, учком председателĕ А. Матвеев çăматăлăх 2 кĕренке çăм, пĕр мăшăр алшиш, 8-мĕш «А» класра вĕренекен отличница Т. Жилина пĕр мăшăр алшиш, пĕр мăшăр чулха, сăмса тутри, К. Иванова перчатка, носки пачĕç. Йăшă туттир пухас ĕç сарăлсах пырать.

А. ОРЛОВ.

* * *

ЙĔПРЕÇ. Хĕрлĕ Çар валли йăшă туттир парасси çинчен сӳтсе-явнă хыççăн, «Молния» колхоз членĕсем çак пуçарăва пĕр кăмăллăн ырларĕç. Икĕ-виçĕ кун хушшинчех вĕсем 6,4 килограмм çăм, 13 тир, 1 пăру тирĕ, 2 метр пир пухса районри комиссине леçсе пачĕç.

Акулина Симбирская колхозница 600 грамм çăм тата пĕр сурăх тирĕ пачĕ. «Манăн упăшка фронтра ирсĕр тăшмака хирĕç çапăçать. Тăшмана хăвăртрах çĕмĕрсе тăкма ырăн вĕсене пулăшмалла. Эпир паракан кашни йăшă туттир гитлерла бандăна çапса çĕмĕрме пулăшĕ», тет А. Симбирская юлташ.

Çавăн пекех Илья Симбирский 500 грамм çăм, пĕр сурăх тирĕ, Мария Маргинова, Марфа Федорова пĕрер тир пачĕç.

Дм. МИХАЙЛОВ

Колхозсенчен пĕлтереççĕ

ИШЛЕЙ. Турханти «Сĕнĕ хунав» колхоз хĕрхипе çурхи тырăсене хапана хывса лартрĕ. Колхозра халь авăн çапаççĕ тата хĕрхи çĕртме тăваççĕ. Суха тунă çĕрте комсомолецсем хастарлăн вĕçлеççĕ. М. Вороновпа В. Степанов комсомолецсем пĕр касăллă плугпа кунне 0,60-шер гектар сухалаççĕ.

А. СМИРНОВ.

ЕЛЧЕК. «Осоавиахим» колхоз выльăх-чĕрлĕх ĕрчетмелли плана ытлашшипех тултарчĕ. Выльăхсем валли кирлĕ таранах апат хатĕрлесе хунă. Фермăра вĕçлекенсен вăйăпе 88 тонна силос хывнă, ху вĕç халĕ те пырать. Доярка П. Миллина 8 ĕнерен 9.527 литр сĕт суса илнĕ.

П. ПЕТРОВ.

КОМСОМОЛЬСКОЕ. «Красный воин» колхозăн 4 ферма. Çак фермăсенчи выльăхсене хĕл каçарма лайăх хатĕрленсе пыраççĕ. Витесене юсалă. Çак кунсенче икĕ вите туса пĕтерчĕç.

П. МАРТЫНОВ.

ЭЛЕК. Актайри «Комбайн» колхоз тăван çĕршыв оборонин фондне 200 çăмарта, 200 литр сĕт тата икĕ сурăх панĕ.

В. КАРПОВ.

ХĔРЛЕ ЧУТАЙ. Çак кунсенче «Красное Сормово», «Коминтерн», «Чăваш Коммуни» колхозсем 40-шер пуç лаша валли пĕрер вите туса пĕтерчĕç. «Жнейка», «Мотор» тата «Волна» колхозсенче ĕне витесем лартнă.

П. МАКАРОВ.

Колхозсем хĕрӳллĕ ĕçре

ИЕПРЕÇ. Чăрăшкасси ялсоветне кĕрекен «Х лет Октября» тата Ленин ячĕпе тăракан колхозсен колхозникĕсем пуян тырпула пухса кĕртес тĕлĕшпе аван вĕçлеççĕ. Лайăх çанталăкăн кашни сехечĕпе туллин усă курма тăрăшаççĕ.

«Х лет Октября» колхоз пăрça йышши культурăсемпе технически культурăсене пуçтарса кĕртнĕ. Çак кунсенче тулăпа сĕлĕне те вырса пĕтереççĕ. Колхозниксем уйхирте ударлă вĕçленипе тăшмана хăвăртрах çĕмĕрсе тăкма Хĕрлĕ Çара пулăшаççĕ. Сентябрĕн 7-мĕшĕнче воскресник туса ирттернĕ. Унта 263 çын вĕçленĕ, вĕсем 256 вĕçкунĕ тунă. Вĕçкунĕ çине тивекен 6,5 центнер тырăна оборона фондне кăтартаççĕ. Кунсăр пуçне 3 гектар çинчен пухса илнĕ ыраша оборона фондне пама йышăннă.

Ленин ячĕпе тăракан колхоз пур вĕçпе те малта пырать. Кĕрхи тырăсене районра чи малтан вырса пĕтернĕ, ыраш кĕлтисене капана хывса лартнă, 30 процент çапнă. Çуртрриссене сентябрĕн 10-мĕшĕнче вырса пĕтернĕ. Халь кĕлте туртараççĕ.

Колхоз государство умĕнчи обязательствăсене (аш-какай, сĕт-çу, çăмарта, çăм, укçа-тенĕ тата ытти) тăвçанах тултарнă. Государствăна тырă тăратас график та пурнăçланса пырать.

Д. МИХАЙЛОВ.

Ĕç кунĕпе туллин усă курса вĕçлеççĕ

ÇĔМĔРЛЕ. («Чăваш Коммуни» корр.). Ĕç кунĕпе туллин усă курни уборка вĕçне кĕске срокра тата пысăк пахалăхпа пурнăçлама май парать. Молкачкинăри «Çамрăк вăй» колхозра уборка пуçланичченех обществăллă столовăй тата ача ясли организацилеммĕ пулнă. Çавна май вĕçлеме пултаракан пур колхозниксем те вĕçе активлăн хутшăнаççĕ. Вĕсем ир пуçласа тĕттĕм сăнĕ çапичченех уйра, итем çинче вĕçлеççĕ.

Колхоз ыраш, тулă, пăрça вăхăтра пуçтарса кĕртнĕ. Кĕраки туса пĕтернĕ, пуса татса хутса кăларнă. Государствăна тырă пур культурăсен енĕпе те (сĕлĕсĕр пуçне) парса татнă. Халь колхозниксем аван çапаççĕ, унта 2 молотилка вĕçлет; 3 жнейкăпа сĕлĕ вырaççĕ, кĕлте кĕртеççĕ. Çав вĕссене туме куллен 100 çынран кая мар тухать.

Х. Л.

Кантăр татса пĕтерчĕç

ÇЕРПУ. Чурачăк ялсоветне кĕрекен виçĕ колхозĕнче те кантăр татса кĕртрĕç. «Красный самолет» колхоз татса кĕртнĕ кантăра çапса та хучĕ. Колхоз иртнĕ çулхинчен пĕр центнер ытларах кантăр вăрри туса илнĕ.

Районри ытти колхозсем те çак кунсенчех кантăр татса пĕтереççĕ. Сентябрĕн 20-мĕш тĕлне 200 гектар çинчен кантăр татса кĕртсе плана 80 процент тултарнă.

Г. ПЕТРОВ.

Горючисене перекетлеççĕ

Вăрмар машинно-тракторнăй станцинче вĕçлекен трактористсемпе комбайнерсем вĕç тухăçлăпне куллен ӳстерсе пыраççĕ. С. Даниловпа П. Захаров комбайнерсем тырă вырмалли плана икĕ хут ирттерсе тултарчĕç. Аван çапнă çĕрге вĕçлекен М. Андреев юлташ хăйĕн планне 180 процент тултарчĕ. Çав вăхăтрах вăл 85 килограмм горючи перекетлесе хăварнă. Андреев юлташ ялхуçалăх вĕçĕсене тума пуçланăранпа мĕнтӳрĕ 411 килограмм, Ф. Покровский юлташ 88 килограмм горючи перекетленĕ.

И. ГАВРИЛОВ.

УКЕРЧĔК ÇИНЧЕ: Элĕкри ача садĕнче.

Ф. Иванов фотоӳкерчĕкĕ.

Комсомолецсен паха ĕçĕ

ÇĔМĔРЛЕ. («Чăваш Коммуни» корр.). Древкомбинатри комсомолецсем отечественнăй вăрçă вăхăтĕнче хăйсен вĕçне тĕпренех урăхлатса çĕнетрĕç. Вĕсем пĕтĕм вĕçе вăрçă вăхăчĕ хушнă пек туса пыраççĕ.

Халĕ ĕнтĕ производствăра вĕçлекенсем нормăна тултарса пырассишĕн мар, сменăра темиçе норма тăвассишĕн кĕрешеççĕ. С. Тимофеев юлташ тăвата уйăх каялла ФЗО шкулĕнче вĕренсе. Унтан вĕренсе тухсан, ăна 2-мĕш номерлĕ цеха янă, ответлă вĕçе тăратнă. Паллах, малтанхи кунсенче вăл çавăнăçусăртарах вĕçленĕ. Каярахпа ăна пĕтернĕ, технологи процесне тĕплĕн вĕренсе çитнĕ, ик-виçĕ норма тултарса пыма пуçланă. Август уйăхĕнче вăл плана 490 процент тултарса рекордлă çитĕнӳ тунă. Ку уйăхра тата пысăкрах çитĕнӳ тăвассишĕн кĕрешет.

Комсомолка В. Мареева юлташ 6-мĕш номерлĕ цехра вĕçлет. Паллă стахановка отечественнăй вăрçă вăхăтĕнче куллен нормăна 2 хут, тепĕр чухне унтан та ытларах ирттерсе тултарать.

Ĕç тухăçлăхне ӳстерсе пырас тĕлĕшпе 2-мĕш номерлĕ цехри станочница комсомолка Михайлова юлташ та пример кăтартать. Вăл хăйĕн ĕçне тĕрĕс организацилеммĕ, ĕç кунĕпе туллин усă курать, хăйне панă заданине яланах икĕ хут ытла ирттерсе тултарать. Август уйăх планне вăл 206 процент тултарнă.

Комбинатра вĕçлекенсенчен хăшпĕрисем фронта кайрĕç. Вĕсен вырăнĕнче вĕçлеме часах урăхсем тăчĕç. 5-мĕш номерлĕ цехри комсомолец, ученик-токарь Липатов юлташ токарь вĕçне туса пырать. 3-мĕш номерлĕ цехри комсомолецсем Лопуховпа Воробьев юлташсем ку тариччен арматурщик пулса вĕçленĕ. Халĕ вĕсем столяр пулса вĕçлеме вĕренеççĕ. Август уйăх планне вĕсем иккĕшĕ те ирттерсе тултарнă.

Иккĕмĕш номерлĕ цехри комсомол пуçламăш организацин секретарĕ Кутырева юлташ иртнĕ çултанпах учетчицăра вĕçленĕ. Арçынсем фронта кайнă хыççăн, вăл вĕсен вырăнĕнче вĕçлеме килĕшрĕ. Халĕ Кутырева юлташ сборщица пулса вĕçлет.

Комсомолецсемпе комсомолкăсем ытти участоксенчи вĕççенче те тăрăшса вĕçлеççĕ. Милашина юлташ сушильнăй цехра, Еремеев — 2-мĕш номерлĕ цехра, Г. Иванов—3-мĕш номерлĕ цехра, Леонтьев—ремонтно-механически цехра агитаторсемпе чтецсем пулса вĕçлеççĕ. Хоричева юлташ «Металлист» стена хаçачĕн редакторĕ. Вăл хăйне шанса панă вĕçе тивĕçлĕн туса пырать.

Комбинатри рабочисем хушшинче сывлăшран килсе тапăнассинчен сыхланма вĕренессине начар мар организациленĕ. Комсомолецсенчен 8 çын инструкторсем пулса вĕçлеççĕ. Вĕсем темиçе çĕр çынна вĕрентсе кăларчĕç те ĕнтĕ. Комсомолка Павлова юлташ кĕске вăхăт хушшинчех ПВХО кружокĕнчен 101 çынна вĕрентсе кăларчĕ. Вăл занятисене яланах расписани тăрăх тата интереслă ирттерет.

Лапшова, Кутырева, Марков юлташсем те ПВХО инструкторĕсем пулса вĕçлеççĕ.

Хальхи вăхăтра 8 комсомолка медицина сестрисем хатĕрлекен курсра тата 3 комсомолец шоферсен курсĕнче вĕренеççĕ. Вĕсемпе пĕрле комбинатри çамрăксем те чылай. Теприсем тата самозащита групписенче тăрса вĕренеççĕ. Комсомолец Горяев юлташ самозащита группине ертсе пырать.

Комбинатри комсомол организацине ӳссех пырать. Юлашки эрнесенче кăна комсомола кĕме 10 çамрăк заявлени панă. Вĕсем пурте, ытти комсомолецсем пекех, тăван Хĕрлĕ Çара стахановла вĕçпе пулăшса пыраççĕ.

ХАР. ЛИСИН.

Хĕле хатĕрленес ĕç йĕркеллĕ пырать

Шупашкарти спиртзавод директорĕ Горшков юлташ рабочисем хушшинче хĕле хатĕрленес вĕçе тимлĕн туса пырать. Цехсенче кирлĕ ремонтсене туса пĕтернĕ темелле. Халĕ рабочисемпе работницăсем пурăнакан общежитисене юсаççĕ. Завод хĕл каçма çителĕклĕ вутă хатĕрленĕ. Çавăн пекех рабочисене те хĕл каçма çителĕклĕ вутă уйăрса панă. Лашасене хупмалли ăшă витесене юсаса çитернĕ. Фронта кайнă рабочисен семьисене лайăх хваттерсене куçарса вырнаçтарнă. Ытти предприятисемпе учрежденисен те хĕле кĕтсе илме çавнашкал тăрăшса хатĕрленмелле.

ДАНИЛОВ-ЧАЛДУН.

Коммунистсем халăха çар ĕçне вĕрентес ĕçре

Тăвай районĕнчи нумайăш колхозсенче сывлăшран тапăнниччен тата химиллĕ тапăнуран сыхланма вĕренмелли тата пăшалтан пеме вĕренмелли кружоксем ĕçлеççĕ. Кружоксене чылайăшне ялти коммунистсем ертсе пыраççĕ.

Акă «Хĕрлĕ Октябрь» колхозра çар ĕçне вĕрентес тĕлĕшпе ВКП(б) членĕн кандидачĕ Алендеев юлташ тăрăшса ĕçлет. Вăл ПВХО кружокĕсен инструкторĕсемпе занятисем ирттерет, вĕсене практикăллă ĕçре пулăшса пырать. Çавна пула кунта кружоксем аван ĕçлеççĕ. Учитель Никифоров юлташ ертсе пыракан кружокра 16 заняти ирттернĕ, кашни занятирех 30—40 çынран кая мар пулать.

Парти кандидачĕсен Сĕнĕ Пуянкассинчи группинче тăракан çамрăк коммунистсем В. Казаковпа Семенов юлташсем ПВХО кружокĕсен ĕçне лайăх ертсе пыраççĕ. Кунта колхоз бригадисенче кружоксен занятийĕсем йĕркеллĕ пулса иртеççĕ, вĕсенче колхозниксем йышлăн пулаççĕ.

Çавăнпа пĕрлех çак коммунистсем хăйсем те çар ĕçне вĕренме тăрăшаççĕ: строевой службăна, пăшал пеме, граната ывăтма, танковăй войскăсен тата пехотăн тактикисене вĕренеççĕ.

М. РАЗНОМАЗОВ.

Краснов комсомолецран пример илеççĕ

Сменăра нормăна икçĕршер процент тултарса вĕлекенсен йышĕ пур фабрикăсемпе заводсенче те ӳссех пырать.

Улатăрти паровозсем юсакан заводра нормăна икçĕр процент тултарса вĕлекен комсомолец Краснов юлташ ĕç тухăçлăхне хăпартас тĕлĕшпе пысăк пахалăх кăтартать.

1938 çулта вăл токарно-сборочнăй цеха ученик пулса вĕлеме кĕнĕ.

Чăн-чăн патриот пĕтĕм вăйран тăрăшса вĕренсе, часах токарьсен ĕçне хăнăхса çитрĕ, хăй тĕллĕн вĕлеме тытăнчĕ.

Отечественнăй вăрçă кунĕсенче Краснов юлташ 5-мĕш разрядри квалификациллĕ токарь ятне илме тивĕçлĕ пулчĕ.

Сменăри нормăна вăл яланах 200 процент тата ытларах та тултарать. Краснов юлташ вĕлекен вырăн яланах йĕркеллĕ, станокĕпе инструменчĕсем таса. Вăл нихăçан та вăхăта шутласа вĕлемест, заданисене срокченех пурнăçлать.

Краснов юлташ хăйĕн ĕçне тĕрĕс йĕркеленĕ. Вĕлеме пуçличчен темиçе минута маларах цеха пырса, хăйне кирлĕ материалсене хатĕрлет, инструменчĕсене речĕпе хурса тухать. Унăн пĕр минута та усăсăр иртмест.

— Отечественнăй вăрçă кунĕсенче хăвăн та, юлташăн та вĕлемелле. Çапла вĕлени тăшмана хăвăртрах çапса çĕмĕрме пулăшать, — тет Краснов юлташ.

Краснов юлташ — цехра комсомол организацин секретарĕ. Секретарăн пуçарăвĕ — пысăк ĕç. Комсомолецсем хăйсене ертсе пыракăнăччен пример илеççĕ, Краснов пек вĕлеме тăрăшаççĕ. Çавăнпа токарно-сборочнăй цехра пур комсомолецсем те стахановецсем, пурте нормăна 200-шер процент тултарса вĕлеççĕ.

Т. К.

ПРОМЫШЛЕННОСТЬ ПРЕДПРИЯТИЙĔСЕНЧЕ

Ĕç нормине икшер-виçшер хут тултараççĕ

ÇĔМĔРЛЕ. Древкомбинатри рабочисем отечественнăй аслă вăрçă кунĕсенче производствăра питех те тăрăшса вĕлеççĕ. Комбинатра нормăна ирттерсе тултаракансен йышĕ пысăк.

Ĕç тухăçлăхне ӳстерсе пынипе нормăсене икшер-виçшер хут тултаракансен йышĕ ӳсет. Слесарьсем Мартынов тата Кабанин юлташсем кашни кунах нормăна виçшер хут ытла тултарса вĕлеççĕ; тимĕрçсем Парамонов, Афонин, Моисеев юлташсем тата ыт. те нормăна икшер хут ытларах тултараççĕ; столярсем М. Иванов, А. Кабанин, Ашеркин, М. Щербаков, Я. Кондратьев кашни кунах икшер-виçшер норма параççĕ.

Производствăллă заданисене тултарас тĕлĕшпе рабочисем вăхăта пăхмасăрах тимлĕн вĕлеççĕ. Мокрополов, Трушин, Желнов, Гуськов, Никитин тата Павлов столярсен бригадисем япаласене туса çитерме кирлĕ детальсене хатĕрлесе парса çитермесĕр нихăçан та цехран тухса каймаççĕ. Çав бригадăсен членĕсем пурте двухсотниксем. Столярсем Тюлинпе Лимонов юлташсем пĕр ĕçе талăк хушшинче туса пĕтернĕ, халичченхи норма тăрăх çав ĕçе тума сахалтан та тăватă талăк кирлĕ пулнă.

Мастерсем Нефедьев, Леонтьев тата Андриянов юлташсем производствăра тăрăшса вĕленин образецне кăтартаççĕ. Хăйсен сменипе вĕленĕ хыççăн, вĕсем верстак çумне тăрса столярнăй ĕççене тăваççĕ, продукци туса кăларассине хăвăртлатаççĕ.

Хĕрлĕ Çар ретне кайнă упăшкисем, пиччĕшĕсем тата ывăлĕсем вырăнне ĕçе тăнă патриоткăсем те питех те ăстан тумалли ĕççене вĕренеççĕ. Бехтяева, Курылева, Краснова, Кутырева, Корчагина юлташсем т. ыт. те столярнăй ĕçе вĕренсе пыраççĕ, верстахсем çинче вĕлеççĕ.

Пирĕн коллектив тимлĕн вĕленипе тăван çĕршыва валли нумайрах продукци парса тăма тăрăшать.

И. ПОДЛЕКТНОВ.
Комбинатри партбюро секретарĕ.

Двухсотниксем

Вăрмарти спортинвентарьсем тăвакан фабрикăра иртнĕ уйăхсенче стахановецсемпе ударниксен хисепĕ 10—15 çынран иртмен, халĕ стахановец-двухсотниксен хисепĕ темиçе вунтăрăн шутланать. Ĕç нормине 200-шер процентран иртерсе тултаракансен хисепĕ кун-ран-кун ӳссе пырать. Анна Данилова, Акулина Иванова, Иулита Романова, Анна Сергеева, Татьяна Степанова, Екатерина Яковлева тата ытти токарьсем август уйăхĕнчи ĕç программине 230—257-шер процент тултарнă. Вĕсем халĕ те куллен нормăна 200 процентран ытларах тултарса пыраççĕ.

Çавăн пекех полировщицăсем Елена Иванова 226 процент, Анна Кириллова —231 процент, Дария Данилова — 255 процент тултарнă. Столяр Иван Романов 217 процент, Фадей Митрофанов 202 процент, торцовщица Ирина Кириллова 233 процент, Евдокия Федорова— 214 процент тултараççĕ.

Нормăна 2 хут ытла тултаракансен хисепĕ кулленех ӳсет. Ун çинчен нумай фактсем каласа параççĕ. Калаçура торцовщица И. Кириллова юлташ çапла каласа панĕ: «Эпĕ халиччен те ĕç нормине нумай ытларах тултарса пынă. Август уйăхĕнче 233 процент тултартăм. Кунта тĕлĕнмелли нимех те çук. Ĕç вăхăчĕпе туллин усă курсан, станока таса тытсан, брак тумасан фабрикăри пур рабочисем те çакăн пекех вĕлеме пултараççĕ. Халĕ эпĕ хамăн юлташсене те хам пекех вĕлеме вĕрентетĕп».

Двухсотниксене куллен пулăшса, хавхалантарса пыни кирлĕ.

Партипе комсомол тата профсоюз организацисен двухсотниксене куллен пулăшмалла, вĕсен пахи опычĕсене масса хушшине анлăн çармалла.

И. СТЕПАНОВ.

Иртнĕ хĕлле пулнă çитменлĕхсене шута илнĕ

Канашри вагонсем юсакан завод хĕле хатĕрленме Л. М. Каганович юлташ Сурçĕр-Донец чугунçулĕн пĕр станцин коллективĕ патне янă телеграммăна сӳтсе-явнă хыççăнах тытăннă. Вăрçă вăхăтĕнчи йывăрлăхсене шута илсе, завод коллективĕ цех сурчĕсене юсассипе кантăк лартассине, алăхсене ăшă тытмалла тăвассине хăйсен вăйăпех ĕç пĕтернĕ хыççăн туса иртерме пуланă. Халхи вăхăтра рабочисем вагонсем юсакан, урапа тăвакан цехсене, электростанци сурчĕсене çине тăрсах юсаççĕ. Электростанцин икĕ хуранне тĕпренех юсанă, электроприборсене пĕтĕмпех пăхса тӳрлетсе тухнă. Вагонсем юсакан, урапа тăвакан цехсенче юрăхсăр чӳрече рамисене улăштарнă, алăхсене ăшă тытмалла тунă, шăтăк-çурăксене питĕрнĕ, электричество фонарĕсене тӳрлетнĕ.

Иртнĕ хĕлре завода йĕркеллĕ ĕçлеме завод территорийĕнчи çулсем çине юр хывнă, самаях чăмантарнă. Мĕншĕн тесен рабочисене 10-шар çын час-часах юр хырма илсе тухмалла пулнă. Завод управленийĕ иртнĕ çулхи çитменлĕхсене шута илсе кăçалхи хĕл юра машинăпа тасатса тăма инвентарьсен списокĕнчен кăларса пăрахнă юр тасатмалли кивĕ машинăна юсама хушнă.

Çак вăхăта кивĕ çулсене пĕтĕмпех юсаса тухнă. Çĕрсе тата çурăлса пĕтнĕ шпалсене 2100 штука улăштарнă, 500 штука çĕнĕ накладка хывнă т. ыт. те.

Анчах заводра хĕле хатĕрленес тĕлĕшпе туса çитермен ĕçсем çук марха. Рабочисем вĕсене туса çитерсе, çак ответлă хĕлре хăйсен заводне нихçанхинчен тухăçлă ĕçлеттересшĕн тăрăшаççĕ.

Т. ИВАНОВ.

Пур колхозсенче те пахча-çимĕççем типĕтессине организацилеммелле

Çĕрулми тата пахча-çимĕççем типĕтесси халăх хуçалăхĕнче пысăк вырăн йышăнса тăрать. Çакна шута илсе СССР Совнаркомĕ колхозсемпе колхозниксен тата единоличник хуçалăхĕсен 1941 çулшăн государствăна обязательство шучĕпе памалли пахча-çимĕççене типĕтсе пама ятарласа постановлени йышăнчĕ. Çак постановление колхозсен, колхозниксемпе единоличник хуçалăхĕсен пурин те пĕр сăмахсăрах пурнăçа кĕртни кирлĕ.

Пахча-çимĕççене типĕтсен вĕсен тутипе пахалăхĕ пĕтмест. Типĕтнĕ пахча-çимĕççем чĕрĕ çимĕççенчен 8—10 хут çăмăлтарах пулаççĕ. Вĕсем хĕллехи сивĕре те пăсăлмаççĕ. Инçетри пунктсене турттарса каяс пулсан чугунçул транспортне çăмăллатать.

Пахча-çимĕççене типĕтмелли техника йывăр мар, ăна колхозниксем хăйсем тĕллĕнех организацилеме пултараççĕ. Çимĕççене çăкăр пĕçермелли кăмакара та ăнăçлăнах типĕтме май пур. Пирĕн республикăри нумай колхозсем халь пахча-çимĕççене типĕтме тытăнчĕç. Сĕнтĕрвăрри районĕнчи Кĕçĕн Маклашкинă колхозĕнче, Вăрнар районĕнчи «1-ое Мая» колхозра т. ыт. колхозсенче те çĕрулми тата ытти çимĕççене пысăк ăнăçлăхпа типĕтеççĕ. Ку ĕçе ытти колхозсенче те халех тытăнас пулать.

Типĕтме хатĕрленĕ çимĕççем пысăк пахалăхлă пулмалла. Çĕрĕк, сивĕпе шăннă тата хурт çинĕ çимĕççене пĕтĕмпех суйласа илмелле. Типĕтме уйăрса хунă пахча-çимĕççене тата çĕрулмине малтан лайăх çуса тасатас пулать. Унтан çиелти хуппине сӳсе тăкмалла та çĕçĕпе касса вакламалла. Çĕрулмине, кишĕре тата кăшмана тирам витĕр вăхăтлăн, пĕр ватмасăр шăтарса тухать пулсан вара пиçсе çитнĕ шутланать.

Çĕрулмине тата кишĕре пĕçернĕ хыççăн, ăна корзинкипе пĕрле çийĕнчех сивĕ шыв çине виксе лартмалла. Пĕçернĕ çĕрулмин крахмал клейстерне сивĕ шыв çинче çуса тасатмалла.

Çĕрулмине пĕçерекен шыва кăштах йăпăлкаланса çитсенех (2—2,5 сехет хыççăн) улăштарса тăмалла, çĕрулмипе кишĕре сивĕтме лартакан шыва, вăл ăшăнса çитнĕ май, улăштармалла.

Çуса тасатнă тата тымар ӳсекен пуçĕсене каснă кăшмана шултрине хура суйласа илмелле те, шывĕ вĕрекен чугун е кастрюля çине ярса 30—40 минута хушши тытса тăмалла. Турам витĕр шĕвĕртнĕ хăйăк вăхăтлăн шăтарса тухсан, вăл пиçсе çитнĕ шутланать. Пĕçернĕ кăшмана сивĕтме сивĕ шыв çине яраççĕ, унтан хуппине тасатаççĕ те 4—7 миллиметр хулăмĕш туса, çаврам касса тураççĕ.

Çапла майпа туса хатĕрленĕ пахча-çимĕççемпе çĕрулмине пĕр пек сийлĕ туса ала çине сарса хумалла. Çĕрулмипе суханăн сийне пĕр сантиметртан ытла мар хулăмĕш туса сармалла, тымар-çимĕççен — 1,5 сантиметр таран, купăстан—1,5—2 сантиметр. Çакăн пек сарса хунă 4,5—6 килограмм çĕрулми е пахча-çимĕç, 3—4 килограмм суханпа купăста пĕр квадратлă метр алапа тан лашать.

Продукципе пĕрле хунă аласене кăмакана е сушилкăна лартмалла.

Аласемпе усă курас умĕн малтан, ăна вĕри шывпа çуса тасатмалла, кайран лайăх типĕтмелле. Пралукран, шпагатран тата чĕрĕ çипрен тунă сеткăсене типĕтнĕ хыççăн, типсупа йĕпетнĕ таса тряпкăпа шăлса типĕтмелле.

Хатĕрленĕ продукцине хуран, чугун, кастрюля, чан, пичке çине тултарма юрать. Ĕç тума тытăнмалли хатĕрсене малтан тĕплĕн çуса тасатаççĕ. Ывăçран тунă савăт-сапасене вĕри шывпа çуса, шăлса типĕтмелле.

Çĕрулмине тата пахча-çимĕççене пĕçерсе хатĕрлеме решетка е хăва хуллинчен тунă корзинкăпа усă курмалла.

Ахаль кăмакара типĕтнĕ чухне, кăмакана çăкăр пĕçернĕ чухнехи пекех хутса ăшăтмалла. Пекарнясенчи кăмакасене çăкăр пĕçерсе кăларнă хыççăнхи температура чухлĕ ăшă пулмалла.

Аласене кăмакана кирпĕчсем хурса вырнаçтарса лартсан, питлĕхпе вьюшкăна пиçсе хумалла. Вăхăт 15—20 минута иртсен, вентиляци тума, вьюшкăна уçса хумалла.

Пахча-çимĕççене типĕтнĕ чухне ăне лайăх асăрхаса тăмалла, мĕншĕн тесен, кăмакари температура пысăк пулсан, пахча-çимĕç (уйрăмăнах суханпа çĕрулми тата тымарсем) ытлашши çунса кайма пултарать, температура çителĕксĕр пулсан, вĕсем йӳçĕхсе каяççĕ тата вентиляци начаррипе пиçĕхсе лараççĕ.

Типĕтме лартнă кăмакари температурăна тата вентиляцине вьюшкăпа питлĕх урлă йĕркелесе тăраççĕ. Кăмакари питлĕхпе вьюшка температурăна чакарма пултарайманччĕ пулсан тата продукци çунса каяс хăрушлăха чарайманскан, вара аласене кăмакаран тортса кăлармалла та, кăмакана кăштах сивĕниччен тытса тăмалла. Пĕр-пĕрин çумне çыпăçса ларнă тата типсе çитнĕ продукцине асăрхануллăн пăтраштарса тăмалла, унтан типсе çитме каллех кăмакана лартмалла.

Çĕрулми, кишĕр тата кăшман кăмакари температура пысăк пулнинчен хăрамаççĕ; сухана, купăстана тата тымарсене малтанах пĕчĕкрех температурăра типĕтме тытăнмалла. Çĕрулмине типĕтмелли температура, вăтамран илсен, Цельсипе 75—90 градус, кишĕрпе кăшман валли—75—80 градус, тымарсем валли—60—70 градус, суханпа купăста валли—55—65 градус пулмалла. Суханпа купăстана типĕтнĕ чухне ытларах вентиляци туни кирлĕ. Типĕтмелли вăхăт, вăтамран илсен, 4—6 сехет пулмалла.

Типĕтмелли ешĕксем çине хунă çĕрулмине, кишĕре тата кăшмана типĕтме чи малтан аялти аласенчен пуçăнмалла, мĕншĕн тесен, унта температура пысăкрах пулать. Унтан алана çӳлти рет çине, унтан вĕсене улăштарса тăрса аялти рет çине куçармалла.

Тĕрĕс типĕтнĕ çĕрулми çинче нӳрлĕх 12 процентран ытла пулмалла мар, вăл хытă пулать, авкаласан хуçалать.

Типĕтнĕ кишĕрпе кăшман та алла илсе чăмартасан, ним тĕпренмесĕрех хуçалать. Типĕтнĕ кишĕрĕн, кăшманăн нӳрлĕхĕ 14 процентран кая пулмалла мар.

Типĕтнĕ сухан шурă тата сарăрах тĕслĕ пулать.

Типĕтсе хатĕрленĕ купăстана питĕ те асăрхануллăн тыткаламалла, мĕншĕн тесен, вăл часах хуçалса вакланать. Типĕтнĕ купăста шурă тата сарăрах çутă тĕслĕ пулать. Çав купăстана алла илсе чăмартасан, вăл часах ванса, тĕпренсе каять. Унăн нӳрлĕхĕ 14 процентран ытла пулмалла мар.

Лайăх типĕтнĕ продукцине 25—30 минута хушши типĕ çуртсене сивĕтме лартмалла, унтан ăна вăхăтлăха тытса усрама, лайăх çуса типĕтнĕ ларсем çине пушатса хумалла.

Ларсен е çавăн йышши япаласен сивиттине тачă хупăнмалла тăваççĕ, ăна типĕ, çил кĕрекен, май килнĕ таран таса, температурăпа сывлăш улшăса тăман, шăршлă мар çуртсене вырнаçтарса лартмалла.

Типĕтсе хунă продукцине хатĕрлекен пунктсене илсе кайиччен, таса та типĕ япала çине—хăмаран тачă çыпăçтарса тунă ещĕк тата витре, бидон (уйрăмăнах суханпа купăстана) е лайăх михĕсем çине тултарса хумалла.

Р. ОСАНОВ.

Чăваш АССР Çĕрĕç Халăх Комиссариачĕн пахча-çимĕç управленийĕн начальникĕ.

Англире СССР валли танксем туса кăлармалли эрне ирттереççĕ

ЛОНДОН, сентябрĕн 23-мĕш. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, Англин çар снабженин министрĕ Бивербрук танксем туса кăларакан заводсенчи мĕнпур рабочисем патне телеграмма янă, çав телеграммăра вăл çапла кăтартса панă: сентябрĕн 22-мĕшĕнче тунтикун пуçланакан çичĕ кун хушшинче çав заводсем туса кăларакан пĕтĕм продукцине Совет Союзне ярасçĕ, тенĕ. Бивербрук çак эрнере мĕнле пулсан та танксем ытларах туса кăларма чĕннĕ.

Бивербрук çапла чĕнсе каланă хыççăн рабочисем хушшинче производствăлла çĕкленӳ вăйланса кайнă.

«Дейли Геральд» хаçатăн корреспонденчĕ, заводсенчен пĕрине пырса курнăскер, Бивербрук чĕнсе каланине ăна курăнмалли вырăна çыпăçтарса куни çинчен пĕлтерет. Рабочисем ĕç тухăçлăхне чылай ӳстернĕ, вĕсем мĕн вăй çитнĕ таран тимлĕн ĕçлесе, мĕнле пулсан та продукци ытларах туса кăларассишĕн тăрăшаççĕ. Рабочисем çак эрне хушшинче ĕç кунне вăрăмлатма кăмăл тунă.

СССР валли танксем туса кăлармалли эрне пуçланса кайнă май, ССР Союзĕн Лондонри посолĕ Майский юлташ чĕнсе каланине пичетлесе кăларнă.

Болгари умне Германия тăратнă ультиматум çинчен „Нью-Йорк таймс“ хаçат мĕн çырать

НЬЮ-ИОРК, сентябрĕн 23-мĕш. (ТАСС). Ютçĕршывсенчи дипломатиллĕ сынсенчен илнĕ ĕненмĕ тивĕçлĕ сведенисем çине кăтартса шарса, «Нью-Йорк таймс» хаçат çапла пĕлтерет: Совет Союзне хирĕç вăрçа тухма ыйтса, Германия сентябрĕн 19-мĕшĕнче Болгари умне чăн-чăн ультиматум тăратнă. Апла тумасан, — тесе каланă ультиматумра, — Германи çарĕ Болгарине оккупацилет. Ютçĕршыв сыннисем хушшинче каласа панă тăрăх, юлашки вунă ӳн хушшинче Болгарире вăрçа хатĕрленесси вăрçă вăхăтĕнчи пекех пысăккăн сарăлса кайнă. Юлашки пиллĕк кун хушшинче халăхăн пĕр пайне мобилизацилеме тата çĕнĕрен виçĕ дивизи хатĕрленĕ. Бургас тата Варна районĕсенче военнăй положени туса хунă. Çав районсенче каçхине пĕтĕмпех тĕтĕмлетеççĕ. Çак портсене ют çĕршыв суднисене пурне те кĕме чарнă. Оккупацилеме территорисенче пурăнакан грексемпне югославецсене те мобилизацилемелле. 1921 çулта çуралнă мĕнпур военнообязаннăйсене мобилизацилесе хĕвелтухăçне ăсатнă. Сентябрĕн 14-мĕшĕнче Болгарире «Государствăна хӳтлесси çинчен кăларнă закона» пăснăпăн асаплантарса вĕлермелле тунă.

Пĕтĕм Болгарире йĕркесĕрлĕхсем пулса иртеççĕ. Классенче «коммунистла тавлашусем» пулса иртнĕ май правительство иккĕмĕш сыпăклă 19 шкула хупнă. Ютçĕршывсенче çар сыннисем каласа панă тăрăх, Пловдивра темиçе сурта, София хули патĕнче табак ӳсракан икĕ склада вут тĕртсе çунтарнă. Иртнĕ эрнере София хулинче кавалери казармисем çунса кайнă, икĕ эрне каялла урпа, ыраш тата тулă склачĕсем çунса кайнă. Çĕршыв ăшĕнче йĕркелĕх тытса тăрас тесе ятарласа дивизи уйăрнă.

Войскăсене хĕвелтухăçнелле куçарнă май, çĕршыва мĕнпур чугунçулсем чарăнса ларнă.

Нимĕç писателĕн Людвиг Реннăн çырăвĕ

Совет писателĕсен Союзне нимĕçсен пăлăн писателĕнчен Людвиг Реннран çыру килнĕ, унта вăл Совет Союзне юратнине пĕлтерет тата фашистла Германие хирĕç пыракан вăрçăра Совет Союзĕ çĕнтерни фашистсем чуралантарнă пур халăхсене те ирĕклĕх парассине шанни çинчен калать.

Людвиг Ренн çапла çырать:

«Эпĕ Гитлер тĕрминче ларнă чух антифашистсен чун-хавал пуянлăхне тата нацистсен тăмсайлăхне куртăм. Пĕр тĕрмере тытса хупнисенчен сахалтан та виçĕ пайĕнчен икĕ пайĕ коммунистсеммĕн, вĕсен хушшинче çӳллĕ пĕр çамрăк сын пурччĕ, вăл ытти сене савăнтарма юрататчĕ. Унăн чĕри пысăкчĕ. Политикăллă ĕçсемшĕн хупса лартнисем ăна юрататчĕç. Вĕсем мана çапла каласа пачĕç: вăл суд умĕнче пĕтĕм айăпа хăй çине илнĕ, вара революци ĕçĕсемшĕн хĕçпăшал вăрланăпăн айăпланакансене пурне те кăтарнă».

Малалла Людвиг Ренн çапла çырать:

— Анчах эпĕ ытти çынсене те — нацистсене те куртăм. Вĕсем пурте хăйсене панса панă укçана растрата тунăпăн тĕрмене лекнĕ, пурте пĕр пекех сăнарлă — çирĕм çул таврашĕнчи сывлăхлă та вăйлă каччăсем. Вĕсем пурте тĕтĕмскерсем, вĕсен нимĕнле духовнăй интересем те çук.

Фашистла движенин пысăк çынни.сем камсем пулса тăраççĕ-ха? Уголовнăй йĕркепе тата медицина енчен пăхсан, вĕсенчен хăшĕн ирĕкре çӳреме право пур-ши? Ертсе пыракан постсене йышăнса илнĕ фашистсене пĕрин хыçĕнчен теприне илсе пăхатăп та, вараланчăк маррине пĕрне те тупаймастăп. Нацизмра ĕлĕкхи кивĕ сăмах: вĕтĕ вăрăсене çакаççĕ, шултрисен аллисене власть параççĕ,—тени пурăçа кĕчĕ.

Ренн юлашкинчен çапла çырать:

— Шултра вăрăсене çакса пĕтерме юлашкинчен вăхăт çитрĕ ĕнтĕ. Эпир юлашкинчен государство посчĕсенче эсрелсене мар, этемсене курасшăн. Пысăк чĕреллĕ çынсем пысăк ирĕклĕхре пуласси кирлĕ пире. Фашистла Германия Совет Союзне хирĕç пуçласа янă вăрçăра пысăк тивĕçлĕхсем çинчен, чи малтан халăхсен ирĕклĕхĕ çинчен ĕç пырать. Çавăнпа та эпир Совет Союзĕшĕн тата унăн çĕнтерĕвĕшĕн тăмалла. Совет Союзĕ çĕнтерсен, фашистсем чуралантарнă халăхсемшĕн çĕнĕрен хĕвел тухĕ.

Германире ĕç вăйĕ çитмест

ЛЮНДОН, сентябрĕн 23-мĕш. (ТАСС). Англин экономикăллă вăрçă министерстви даннăйĕсем тăрăх, Германире ĕç вăйĕ çитменни çивĕчлемсех пырать. Арăсынсенчен нумайĕшне, квалификацилле рабочисенчен те чылайĕшне çара илнĕ. Нимĕçсем шкулсенче вĕренекен ача-пăча вăйĕпе усă курса, производствăна вырнаçтарнă ютçĕршыв рабочийĕсен тата тытăкăна илнĕ çар сынни.сен шутне ӳстерсе, ĕç вăйĕ çитменнине витесшĕн. Анчах та Германи промышленноçĕнче халĕ 1940 çултинчен çур миллион ытла рабочи çитмест. Пахалăх енчен ĕç вăйĕн шайĕ шут енчинчен те нумайрах начарланнă. Вăрçă пуçланнăранпа 300 пине яхăн кĕрарăма кăна ĕçе кĕртме пултарнă. Ĕçлекен кĕрарăмсенчен 88,7 процентĕ унччен ĕçленĕ промышленность отраçлисенчех ĕçлеççĕ.

Нумаях пулмасть кĕрарăмсем валли ĕç повинноçĕн срокне ӳстерни ялхуçалăхĕнчи ĕçсем валли те, промышленность валли те кирек мĕнле те пулсан ытлашши вăйсене пама пултараймасть.

Халĕ Германире икĕ миллиона яхăн ютçĕршыв рабочийĕсем пур тесе шутлаççĕ. Итальянецсен шучĕ сисĕнмеллех ӳснĕ. Германире июнь вĕçĕнче 300 пин итальянец ĕçленĕ; август уйăхĕн вĕçĕнче вĕсен шучĕ 400 пин çынна çитнĕ. Итали правительстви декабрь пуçламĕшĕнче тата 200 пин рабочи яма сăмах панă.

Голландипе Дани рабочийĕсем Германине каясшăн мар, илсе килнĕ рабочисем час-часах саботаж туса шыннă пирки нимĕçсем вĕсене ытла кăмăлласах йышăнмаççĕ.

Германия хăйĕн ĕç резервисем хăйсем тĕллĕнех юхăнса пĕтсе пырас хăрушлăх умĕнче тăрать. Совет Союзне кирĕç пыракан вăрçă çак хăрушлăха чăн-чăн пулмалла туса хурать.

ИРАН. Ӳкерчĕк çинче: Тегеран хулинчи урамсенчен пĕри.

Хĕрарăмсен Мускавра пулса иртнĕ фашизма хирĕçле митингĕ çинчен США-ра мĕн калаççĕ

НЬЮ-ИОРК, сентябрĕн 23-мĕш. (ТАСС). Америкăн ССР Союзĕпе сыхăну тытас ыйтусемпе ĕçлекен советчĕ хĕрарăмсен Мускавра пулса иртнĕ фашизма хирĕçле митингĕнче тухса каланă, радио тăрăх панă сăмахсене пурне те хăй пленка çине çырса илни çинчен пĕлтернĕ. Совет Америкăпа Англи хĕрарăмĕсен ячĕпе саламланнисене, хĕрарăмсен Мускавра пулнă митингĕнче тухса каланисене, вĕсене Англи чĕлхи çине куçарса, пластинкăсем çине çырса илеçтĕн.

Совет Америка хĕрарăмĕсенчен Совет Союзĕн хĕрарăмĕсене янă çĕнĕ саламсем нумай иличĕ. Америкăн Совет Союзĕнчи посолĕ пулнă Дэвисăн арăмĕ Марджори Дэвис çапла çырать: «Совет халăхĕн çапăçури пултарулăхĕпе, чăтăмлăхĕпе, тĕлĕнмелле хăюллăхĕпе епир пурте савтери мухтанатпăр». Антрополог Маргарет Мид: «Сирĕн çĕршывăпăн тата пĕтĕм тĕнчери ирĕклĕхшĕн пыракан вăрçăра çитĕнӳ пулассине эпĕ пĕтĕм тунран ĕмĕтленетĕп», тесе çырать. Производствăллă профсоюзсен конгресне кĕрекен, транспорт çинче ĕçлекен хĕрарăмсен профсоюзĕн руководительници Миритэм Мэрфи хăйĕн телеграмминче «гитлеризма хирĕç кĕрешме мĕнпур хĕрарăмсен пĕрлĕх фронтне тума» чĕнет.

Писательница Элис Винтер çапла çырать: «Хĕрарăмсем Совет государствине тума пулăшнă, унта пĕтĕм халăх материаллă ырлăхсемпе усă курать тата ханма та, ирĕк пурăнма та пултарать. Вырăссем гитлеризма хирĕç пыракан татăклă кĕрешӳре хăйсен ырă пурнăçне хӳтлеççĕ. Вырăс хĕрарăмĕсем Россинăнне кăна мар, пĕтĕм тĕнчен тивĕçлĕхĕпе ирĕклĕхне хӳтлессишĕн юнне юхтараççĕ тата хăйсен пурнăçне тараççĕ. Америка хĕрарăмĕсем пĕтĕм тĕнчери халăхсене çăлса хăварассишĕн хăйсен пурнăçне хĕрхенмесĕр çапăçма хатĕр тăрса хăюллăн кĕрешекен вырăс хĕрарăмĕсене саламлаççĕ».

Норвегия выçă хĕл умĕнче тăрать

СТОКГОЛЬМ, сентябрĕн 23-мĕш. (ТАСС). Швецири «Гетебергс хандельстиднингн» хаçат, Норвегири продовольстви тĕлĕшĕнчи лару-тăру çинчен калаçа, çапла çырать: «Норвегире продовольстви тĕлĕшĕнчи лару-тăру йывăр, вăл çитес вăхăтра татах та ытларах япăха пымалла. Хĕл питĕ хăрушă пулмалла. Питре шанчăклă выränсенчен пĕлтернĕ тăрăх, Норвегире юлашки виçĕ уйăх хушшинче какай пулман. Хĕвелтухăç Норвегире июнь уйăхĕнчен пуçласа чĕрĕ пулă çук. Сыр пĕтнĕ, çу вырăнне карточкăсем тăрăх маргарин çеç параççĕ. 1940 çулта икĕ çуллăх запас хатĕрлесе хунă пулсан та, кофе пачах та çук. Пахча-çимĕçсем илес тесен вăрăм черетсенче тăмалла. Çĕрулми тупма питех те йывăр. Норвежецсем кĕрпесемпне пăрçана çурманни нумай пулать ĕнтĕ. Норвеги халăхĕ мĕн сисе пурăнать-ха? Юлашки уйăхсенче сынсем ытларах селедка тата типĕтнĕ треска çисе пурăннă. Магазинсенче нормăпа паракан продуктсенчен типĕтнĕ треска, сухăнь суррогачĕсем, селедка тата спичка анчах сутаççĕ. Ыйтас килет, Норвегире çавтери нумай пулнă мĕнпур продовольствисем ăçта кĕрсе кайнă-ха вара? Ăçта кĕрсе кайнине пĕлме йывăр мар. Нимĕçсем выльăха какай валли тытса илеççĕ. Выльăха питĕ нумай пуçаççĕ, Норвегин ялхуçалăх управленнийĕ шутланă тăрăх. выльăхсен унччен пулнă хисепне тепĕр хут ӳстерсе çитерме нумай çулсем кирлĕ».

Германия оккупациленĕ çĕршывсенче асаплантарса вĕлернисем тата террор

НЬЮ-ИОРК, сентябрĕн 23-мĕш. (ТАСС). Юнайтед пресс агентствин Берлинри корреспонденчĕ пĕлтернĕ тăрăх, Германия оккупациленĕ çĕршывсенче, Германи пичечĕн даннăйĕсем тăрăх, августăн пĕрремĕшĕнчен пуçласа 295 çынран сахал мар асаплантарса вĕлернĕ. Асаплантарса вĕлернисенчен нумайĕшне шпионаж тата саботаж тунă, коммунистла ĕçсем туса пынă тесе, Германи салтакĕсем çине тапăннă е оккупациленĕ çĕршывсенчен Англи салтакĕсене тухса тарма пулăшнă тесе айăпланă. Хăшпĕрисене ытти енĕпе те айăпланă. Сăмахран, темиçе çыснапа пăрăва пуçса каяйпне Краков хулинче сутнăшăн Польшăн пĕр мясникне асаплантарса вĕлермелле приговор йышăннă.

Германин влаçĕсем Бельгипе Франципе политикăллă ĕçсемпе тĕрмене хупнисене заложниксен вырăнне тытса тăраççĕ, Германин пĕр салтакне вĕлерсен е тапăнсан ун вырăнне пиллĕк заложникран кая мар пĕрре вĕлересси çинчен пĕлтереççĕ. Массăллăн асаплантарса вĕлернисем Загреб хулинче пулса иртнĕ, унта влаçсене хирĕç тăнăшăн 122 çынна пĕрре пăрахнă, Германи салтакĕ çине тапăннă тесе айăпласа Белградра 50 çынна асаплантарса вĕлернĕ. Польшăн 18 чиновникне асаплантарса вĕлерме приговор йышăннă, вĕсене «икĕ çул каярах Польшăра сахал йышлă немĕçсен представителĕсене тĕссе пынă» тесе айăпланă.

„Тăванăрсене ытлашши кулянассинчен хăтарăр“

Гитлер çарĕн совет çĕрĕ çинчи çулĕ вилтăприсемпе витĕннĕ. Берлин вокзалĕсене Хĕвелтухăçĕнчи фронтра йывăр аманнă вунпăр пин салтаксене тиенĕ санитарнăй вăрăм составсем кашни кунах пырса тăраççĕ. Ун çинчен вилнĕ тата тытăкăна лекнĕ немĕçсен çырăвĕсенче кашнинчех тенĕ пек пĕлтереççĕ. Гитлеровецсем, тылра кулянса ӳкнипе канăçĕсене çухатнăскерсем, фронта вăртăн инструкцисем яраççĕ; вĕсенче салтаксене тăванĕсем патне яракан çырăвĕсенче питĕ те нумай çухатусем çинчен çырма пĕтĕмпех чараççĕ.

Хĕвеланăç енчи фронтра вилнĕ пĕр нацист çумĕнче Штадтильм хулинчи фашистла групповодăн çыруне тупнă. Обласри фашистла «çулпуçăн» директивисем çине кăтартса, çак çырура çапла каланă:

«Сирĕн хулан пĕр-пĕр çынни çапăçу хирĕнче вилес пулсан, ун çинчен пĕлекен çын вилнĕ салтакăн тăванĕсем патне хăвăртах ан çыртăр. Эпĕ сире татăклăн калатăп: тылра çавнашкал хыпарсене, ăна официаллă йĕркепе пĕлтермен пулсан та, питĕ йывăрăн йышăнса илеççĕ. Хăвăрăн аннĕрсене, арăмăрсене тата савнисене пысăк хуйăпа хумханусенчен хăтарасси хăвăртăн килет».

Фашистсем Хĕвелтухăçĕнчи фронтра калама çук пысăк çухатусем тӳснине пытарма кирек мĕнле тăрăшсан та, тĕрĕслĕх тыла сăрхăнса кĕрет, Германире канăççăрлăх куллен-кун ӳссе пырать. (ТАСС).

Хĕвелтухăç фронтĕнче немĕçсен калама çук пысăк çухатусем пулаççĕ

СТАМБУЛ, сентябрĕн 23-мĕш. (ТАСС). Ирĕклĕ французсен Сывăх-Хĕвелтухăçĕнче тухса тăракан «Франс» ятлă хаçачĕ пĕлтернĕ тăрăх, ирĕклĕ Франципн главнăй штаб аллинче документсем пур, çав документсем немĕçсем Хĕвелтухăç фронтĕнче тӳсекен калама çук пысăк çухатусен результачĕсем франципи оккупациллĕ çарăн составĕнче ытларах та ытларах сисĕнтернине çирĕплетсе параççĕ. Франципе вырнаçса тăракан Германи чăсĕнчи нумайĕш офицерсемпе салтаксене, виçĕ эрне хушши вĕрентсе хатĕрленĕ хыççăн, Хĕвелтухăç фронтне янă. Франципн оккупациленĕ зонисене немĕçсен 16—17 çулхи новобранецĕсем пырса çитнĕ.

Германин çĕнĕ провокацийĕ

АНКАРА, сентябрĕн 23-мĕш. Журналистсен хушшинче немĕçсен подводнăй лодки Хура тинĕс çинче Болгари пароходне путарни çинчен пĕлтереççĕ. Çак парохода немĕçсем совет флочĕ путарнă, тесе каламa пăхаççĕ. (ТАСС).

Гитлерла банда аманнисене вĕлерет

Германи территорийĕнче ĕçлекен вăртăн радиопередатчик нумай пулмасть нацистсем хăйсен аманнă салтакĕсене госпитальсенче юриех вĕлерни çинчен чĕрене çурса яракан хыпарсем пĕлтернĕ. Пернаури госпитальре фельдфебель Герберт Беккар вилнĕ хыççăн çакă палăрнă: йывăр аманнисем сыватнă хыççăн строя тавăрăнма шанчăк çук пулсан, вĕсене вĕлерме немĕç врачĕсене командовани кăтарту панă.

Вĕлерес ыйтăва кашнинчех госпиталĕн главнăй врачĕ татса парать, вăл хăй пăхса тухнă тăрăх чир историйĕ çине «Л» саспалли лартать, ку «летальный», урăхла каласан, «вĕлермелле» тенине пĕлтерет. Главнăй врач вĕлермелле тунă приговора ординар пурнăçлать, вăл аманнин венине пĕрререн пуçласа икĕ кубла сантиметра çитиччен сывлăш ярать. Темиçе секундăран инфекци хыççăн чĕре параличĕ пулать те çын вилет. Фашистсем аманнисен сăнĕ Германи халăхĕ çине лайăх мар кăмăл ан сартăр тесе тата ытлашши çиекенсенчен хăтăлас тесе аманнисене юриех вĕлереççĕ. «Тулли-мар пурнăçсене» пĕтерсе тăкас мелпе фашистсем вăрçăччен ăсран тухнисен лечебницисенче туса пăхнă, вĕсенче венăна сывлăш ярса ăсран кăларнă чылай çынсене вĕлернĕ. (ТАСС).

Çар карапĕсене США-ра юсаççĕ

ВАШИНГТОН, сентябрĕн 20-мĕш. (ТАСС). США тинĕс министерстви США-ра Англин пĕр линкорне, пĕр авианосеце тата Англин чылай çар карапĕсене юсаççĕ тата провизи хатĕрлеççĕ, тесе пĕлтернĕ.

Комсомолка Зоя Миронова Шăхаса нта виçĕ çул хушши почтальонра ĕçлет. Лайăх ĕçленĕшĕн ăна темиçе хутчен те премиленĕ. **Ӳкерчĕк çинче:** Миронова юлташ (сулахайра) хаçат валеçсе çӳрет.

Англипе Германи хушшинчи вăрçă

ЛОНДОН, сентябрĕн 23-мĕш. (ТАСС). Англин авиаци министерствин коммюникинче çапла каланă: сентябрĕн 23-мĕш ыран тенĕ чух çĕрле Англи территорийĕнче противник авиацийĕн активлăхĕ вăйлах пулман. Тĕтĕмленесе çитсен Германин пĕччен самолечĕ Англин хĕвелтухăç пайĕнче бомбăсем пăрахнă. Сиен питех те сахал пулнă, жертвăсем çук.

Сентябрĕн 22-мĕшĕнче сыранри авиацин «Боффр» йышши самолечĕсем, Норвеги çыранĕнче патруллĕ вĕçевре пулнă чухне, противникăн грузовой пысăк пароходне атакăланă. Парохода сиенленĕ.

Сентябрĕн 23-мĕш ыран тенĕ чух çĕрле çанталăк япăх тăнă, çапах та бомбардировщиксен пысăк мар отрячĕ Булоньри доксем çине вĕçсе пырса тапăннă, хăйсен базине пĕр çухатусăрах тавăрăннă.

Сентябрĕн 21-мĕш ыран тенĕ чух çĕрле туса иртернĕ операцисем вăхăтĕнче Англин пĕр бомбардировщикне персе ӳкернĕ пулнă, бомбардировщик экипажĕ çăлăнса юлнă.

Германи влаçĕсем Греципе Франципн 20.000 салтакĕпе офицерне тытса чарнă

СТАМБУЛ, сентябрĕн 23-мĕш. (ТАСС). Пурте пĕлеççĕ, Виши правительстви Сирипе çапăçусем пулнă вăхăтра Денц генералăн войскисене пулăшма 20.000 çын салтаксемпе офицерсем янă пулнă. Германи влаçĕсем сĕннĕ тăрăх вăл салтаксене Германи урлă Греципе йăтнă, анчах вĕсем Сирине кайма пултарайман, мĕншĕн тесен Турци правительстви Турци территорийĕ урлă каçарса яма ирĕк паман. Халĕ палла пулнă тăрăх, Германин Греципи влаçĕсем распоряжени панипе Франци салтакĕсемпе офицерĕсене тытса чарнă. Француз салтакĕсем хăйсене Франципе яма ыйтни пурнăçа кĕмесĕрех юлнă.

Германире ăсран тухнă çынсене вĕлереççĕ

НЬЮ-ИОРК, сентябрĕн 22-мĕш. (ТАСС). Оверсис ньюс агентствин корреспонденчĕ çапла пĕлтерет: Австрирен тарса килнĕ çын каласа панă тăрăх, Вена таврашĕнчи Штейнгофри больницăра ăсран тухса йӳтенĕ пур çынсене те нимĕçсем вĕлерсе пĕтернĕ. Çак больницăна хĕвелтухăçĕнчи фронтра аманнă 1000 салтака вырнаçтарнă. Аманнисем валли вырăн ӳстерессишĕн нимĕçсем çуртсене пушатас тесе ватă çынсене вĕлереççĕ. Германи врачĕсем çак тĕлĕпе хăшпĕр ватă çынсене отрава тăвакан япаласене тата çĕнĕ медикаментсене парса экспериментсем туса иртереççĕ.

Сирири çĕнĕ правительство

НЬЮ-ИОРК, сентябрĕн 23-мĕш. (ТАСС). «Нью-Йорк таймс» хаçатăн Дамаскри корреспонденчĕ пĕлтернĕ тăрăх, Сирире çĕнĕ правительство тунă, унта çаксем кĕнĕ: Хассан Хакин—премьер-министр, вăлах финанс министрĕ; Хаиз Кури—ютçĕршыв çĕсен министрĕ; Фаиз Атасси—çутĕç министрĕ; Джебель-Друз автономлă облаçăн лидерĕсенчен пĕри, Абдул Атраш-паша—оборона министрĕ.

Корреспондент сăмахĕсем тăрăх, Сири президенчĕ Тадж-Эд-Дин çĕнĕ правительство йĕркеленĕ чух хăйĕн умне коалицийлле правительство тăвас задача лартнă, çав тĕллеве тытса обществăллă çынсемпе пĕр шухăшлă пулса çĕленĕ.

Плана ытлашшипех тултарнă

ПЕРВОМАЙСКОЕ. «Смычка» колхозăн чăх-чĕп ферминче ĕçлекен Я. Васильева колхозница хăйне хушнă ĕçе тăрăшса тунипе ферма ĕçне чылай малалла ячĕ. Фермăра чăх-чĕпсен йышĕ ӳсрĕ. Çăмарта тăвакан 47 чăхран, 3.290 çăмарта илме палăртнă пулсан, Васильева юлташ 3.550 çăмарта илнĕ. Чăхсем халь те çăмарта тăваççĕ.

В. ДАВЫДОВ.

Хĕвел тĕтĕмленнине ăнăçлăн сăнанă

АЛМА-АТА, сентябрĕн 22-мĕш. (ТАСС). ССР Наукăсен Академин хĕвел тĕтĕмленнине сăнас тĕлĕппе тунă комиссин председателĕ академик В. Г. Фесенков çапла пĕлтернĕ:

Хĕвел тĕтĕмленнине сăнас ĕçе питех те ăнăçлăн иртернĕ. Паллă туса хунă программăна пĕтĕмĕшпех пурнăçланă. Енер ирхине тӳпе пур çĕрте те пĕлĕтсĕр пулнă, Кзыл-Ордара кăна пĕлĕтлĕ пулнă, унта пĕлĕтсем хушшинчи хушăксем витĕр хĕвеле фотографипе ӳкернĕ. Анчах кунта хĕвеле пĕтĕмпех çичĕ хутчен тата тĕкĕмленнин уйăм фазисене питĕ те лайăх ӳкерсе илнĕ. Каменски платора, Джаналанашра тата Алма-Атари обсерваторинче тăнă тĕп экспедицисем уйăмах йĕркеллĕн ĕçлесе пынă. Астрономин çĕнĕ пысăк приборĕсем пĕр кăлтăксăр лайăх ĕçлесе пынă. Вĕсем пулăшнипе совет ученăйĕсем тĕрлĕрен материалсем илнĕ, вĕсене çитес вăхăтра тĕплĕн тишкерсе вĕренеççĕ.

Кăçалхи çул сăнанисем тĕнчери наукăна пысăк та хаклă ĕçсем туса пама майсем параççĕ. Пирĕн астрономсем пуянран пуян материалсем илнĕ, вĕсем хĕвел физика енчен мĕнсенчен тăнине тĕплĕнрех пĕлме пулăшаççĕ. Мана хама чылай приборсем пулăшнипе наука енчен пысăк хаклă тĕрлĕ содержанилле 79 ӳкерчĕк тума май килчĕ. Туса иртернĕ сăнавсен результачĕсене çирĕплетес тесе çитес кунсенче эпир хĕвеле тата пĕлĕт тăрăлăхне контроллĕ ӳкерсе илетпĕр.

Хĕвел тĕкĕмленнине сăнассин пĕтĕм программине ăнăçлăн туса иртернипĕн эпир пĕтĕмпех совет правительствине тавтума тивĕçлĕ, вăл вăрçă обстановки пулсан та, çутçанталăкăн питех те пысăк явленине наука енчен тĕпчеме ученăйсене пур условисене те туса панă.

Çĕнĕ кĕнекесем

Н. ЛЕОНИДОВ. Когда и как русский народ бил германских захватчиков (Вырăсла). 47 стр. Хакĕ 25 пус.

Чăвашгиз пичетлесе кăларнă çак брошюра вырăс халăхĕн паттăрлăхĕ çинчен каласа парать, нимĕçсем Россия çине тапăнса килнине, вырăс халăхĕ вĕсене хăçан тата мĕнле çапса çĕмĕрнине истори примерĕсем тăрăх кăтартса парать.

Брошюрăра 5 сыпăк: 1) Чудски кӳлĕ пăрĕ çинче, 2) Ливони уйăрĕнче, 3) Вырăс çарĕсем Берлинра, 4) Брусилов нимĕçсен фронтне татса кĕни, 5) Нимĕç интервенчĕсене 1918 çулта çапса аркатни.

Нимĕç-юнĕçенсем тахçанах ĕнтĕ ширĕн çĕршыва туртса илме хăтланаççĕ. Лизон тата Тевтон йытă-рыцарĕсем, Прусси королĕсен тара кĕрĕшнĕ çарĕсем, Германи империалисчĕсен çарĕсем,—çаксем пурте пирĕн çĕршыва тапăнса пăхнă. Анчах та ĕç кашни хутрах пĕр пек вĕçленнĕ: çав ирсĕр тĕллеве пурнăçа кĕртме хапсăнса килекен йытă кĕтӳне вырăс халăхĕ яланах çапса аркатнă, ултавлă тăшмансем вара пирĕн çĕр çинчен намăслăн тарнă.

Халĕ Германи фашисчĕсем Совет Союзĕн çĕрĕсем çине ултавлăн та ирсĕррĕн тапăнса кĕчĕç. Совет Союзĕнчи халăхсем пурте тăшмана хирĕç çĕкленчĕç.

Гитлера тата унăн фашистла çарне çапса çĕмĕрĕпĕр. Вырăс халăхĕ Гитлер аслашшĕсен çарĕсене XIII ĕмĕрте Чудски кӳлĕ çинче, XV ĕмĕрте Ливони уйхирĕнче, XVIII ĕмĕрте Пруссине, Берлин патĕнче тата Берлинра, 1918 çулта Украинăра çапса аркатнă. Вĕсен планĕсене ун чухне путарса лартнă. Гитлерăн планĕ те çавăн пекех путланса ларĕ. Пирĕн Хĕрлĕ Çар ăна тĕп тăвĕ.

Çакăн пек брошюрăн кĕске содержанийĕ. Унта тĕп фактсене уçсăн кăтартса панă. Çырма ăна ăнланмалла чĕлхепе çырнă. Çавăнпа Леонидов брошюрине кашни вулаканах сĕнес килет.

В. М-с.

Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0—67, редактор заместителĕн — 3—97, редакци секретарĕн — 4—40, пропаганда пайĕн — 4—97, парти пурнăç пайĕн — 7—97, ялхуçалăхĕпе промышленность пайĕсен — 0—88, çырусемпе рабселькорсен пайĕн — 2—30, дежурнăйăн — 6—23, «Ленин çулĕпе» журналăн — 0—85, издательство конторин—0—23.

НТ 5576.

Гор. Чебоксары, типография № 1 Управления издательств и полиграфии при СНК ЧАССР, Заказ № 448. Ф. б. 98 84 п. л.